кі 8
32+205

Ç. П. ПЕТРОВ.

# СОТСИАЛИСĂМШĂН КĔРЕШЕС ĔÇРЕ ПОЉЂШЕВИКЛА СЫХЛĂХА ӲСТЕРЕР

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
Шупашкар, 1932.

Ç. П. ПЕТРОВ.

# СОТСИАЛИСĂМШĂН КĔРЕШЕС ĔÇРЕ ПОЉШЕВИКЛА СЫХЛĂХА ЎСТЕРЕР

(ПСК(п)П Райком çекретгарĕсен кăнашлăвĕнђе, тата ПСК(п)П Оплăçри Контроћ Комиççи преçитиумĕн Канаш хулинђе ПСК(п)П РКК претçетатĕлĕсемпе пĕрле пулнă ларăвĕнђе тунă токлатсене пĕрлештерсе çырнă).

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
Шупашкар, 1932

# Сотсиалисăмшăн кĕрешес ĕçре пĕлшевикла сыхлăха ӳстерер.

Йулташсем! Çак кунсенҫе кăна Октапĕр револютсийĕ 15 çул тултарнă уйава ҫысласа иртертĕмĕр. Совет сойусĕнҫи пролеттариат, ленинла партти тĕрĕс йертсе пынипе, технĕккăпа екконоцĕк тĕлĕшĕнҫен кайа йулнă çĕрĕçлĕ Раççейрен шултра интустриллĕ çĕршыв, сотсиалисăмла çĕрĕçлĕ çĕршыв туса хума пултарҫĕ.

Пĕрремĕш петтилеткăн çитĕнӳвĕсем—çĕршыва интустрилессин, ҫи малтан происвотствă хатĕрĕсем тăвакан происвотства çĕклес политтĕкăн çитĕвӳвĕсем пулаççĕ. Совет çĕршывĕнҫи пролеттариат, „петтилеткăна тăватă çулта" лосăнка пурнăçлассишĕн кĕрешсе, пĕрремĕш петтилеткăра пĕтĕм халăх хуçалăхне технĕккă тĕлĕшĕнҫен реконструксилессине пурнăçа кĕртсе çитерме интустриллĕ никĕс хывма пултарҫĕ.

Пирĕн партти çĕршыва интустрилес политтĕке ăнăçуллăн пурнăçа кӳртсе пынă никĕс çинҫе пролеттари револютсин ҫи йăвăр, ҫи пысăк сатаҫне—йалхуçалăхне сотсиалисăмла урăхлатса çĕнетессине татса хуҫĕ. Халĕ пĕтĕм ССРС-пе илсен, ҫухăнпа вăтам хуçалăхсенҫен 60% ытла колхоссенҫе пĕрлешсе тăраççĕ. Кăçал вĕсем акакан çĕр лаптăкăшĕ патша самани ҫухнехи пĕтĕм çĕр лаптăкĕнҫен иртет. Совет сойусĕ сотсиалисăмла çул çинҫе татăклăнах çирĕпленҫĕ. Çак çитĕнӳсем йевҫен илсе пăхсан, петтилеткă пĕр ĕмĕр пулса тăрать.

Пирĕн çĕршыври сотсиалисăм строиттĕлстви тĕнҫери пролеттариатăн револютсиллĕ кĕрешӳре

малти рётре пыраҫ. Пӗр йенҫен: Тиеппӑр шывне ҫӗнтерни, Ҫӗпӗрте хурҫӑ шӑратни, Мускаври, Корккири, тата Йарославӑҫри автомашшинсем, вӑйлӑ ҫӗнӗ паравоссем, трактӑрсем, ҫӗнӗ хуласем, сотсиалисӑмла ӑмӑрту; тепӗр йенҫен: Китай Хӗрлӗ ҫарӗ паттӑрӑн кӗрешни, Анклири ӗҫсӗр йулнисен выҫӑ поххоҫӗ, Ланккашширти пиравӑр тӗртекенсен пастовкки, Перлинри транспӑртнӗксен пастовкки, рапоҫҫисем фашшисла террӑрпа паттӑрӑн кӗрешни, кӑпиталисӑма хирӗҫ пӗтӗм тӗнҫери пролеттариатӑн хайарлӑхӗ ҫӗкленни — ҫаксем вӗсем пурте тӗнҫери револютсин е́ҫӗ пулса тӑраҫҫӗ, СССР ку ӗҫре утарлӑ прикатӑ пулса тӑраҫ.

## Ҫӑваш респуплӗкӗн сӑн-сӑпаҫӗ тӗпренех улшӑнҫӗ

Пирӗн ҫӗршыв нумай халӑхсен тӑванлӑ сойусӗ пулса тӑрат. Сотсиалисӑмла опҫӗствӑ тӑвас ҫӗрте пур халӑхсен, патша саманинҫе колони пулса тӑнӑ ҫӗршыври халӑхсен ӗҫҫыннисем, пурте пӗрле, алран ал тытса кӗрешеҫҫӗ. Натсиллӗ автономисен халӑх хуҫалӑхӗ, култтурӗ ӳссе вӑйланса, ӗҫхалӑх массин политтӗкла хастарлӑхӗ ӳссе пыраҫ. Кун синҫен Ҫӑваш респуплӗкӗн ҫитӗнӗвӗсем те аван каласа параҫҫӗ.

Пӗрремӗш петтилеткӑ Ҫӑваш респуплӗкӗн сӑн-сӑпатне тӗпренех улӑштарҫӗ. Пӗрремӗш петтилеткӑра ҫӗнӗ хапрӑк-савӑтсем шӑтса ҫитӗнҫӗҫ. Колхос строиттӗлствинҫе те пысӑк ҫӗнтерӳсем турӑмӑр. Колхоссене тӗреклетес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса иртертӗмӗр. Иртнӗ хӗлле, кӑҫал ҫуркунне апрел уйӑхне ҫитиҫҫенех вӑтамсен уйрӑм ушкӑнӗсем, ҫухӑнсем те, уйрӑм колхоссенҫен кайалла тухнисем пулҫӗҫ. Вӗсем ҫинҫен нимӗн пытармасӑрах каламалла. Анҫах партти орканисатсине вӑхӑтра мопилисатсилесе, вӑхӑтра кирлӗ пек мерӑсем йышӑнса ҫак пысӑк ҫитменлӗхе пӗтертӗмӗр, тесе каламалла. Халӗ колхосран кайалла

тухнисем çук, колхоссене çĕнĕ ђленсем хутшăннисем пур. Кунпа пĕрлех тата çакна та палăртмалла. Колхоссене çĕнĕ ђленсем илес тĕлĕшпе ĕç йапăх пыраť-ха. Халĕ пĕр вырăнта тăнă пек тăратпăр. Пирĕн çак çулхи пĕтĕм ĕçсем, колхоссем тĕрекленсе пыни, вĕсен тупăшĕ палăрмаллах ўссе пыни çывăхри вăхăтра колхоссене çĕнĕ ђленсем хутшăнасси çине кăтартса параççĕ. Кăçал епĕр ђăнласах пысăк çĕнтерўсем турăмăр. Çуракине ăвăçлăн иртертĕмĕр. Çуракине ăнăçлăн иртерни ытти ĕçсене ăнăçлăн иртерме май пађĕ. Тырпула йĕркеллĕн, срукра пухса кĕтĕмĕр. Çакна май тырпул хатĕрлес плана вăхăтђенех тултарма пултартăмăр. Кĕракине çенťапĕрĕн 10-не пĕтерсе Совет Сойусĕпе пĕрремĕш вырăн йышăнтăмăр. Халĕ пирĕн умра колхоссенђе тупăша валеçес сатађ тăраť. Çак сатађа тĕрĕс пурнăçланинђен ĕнтĕ колхос йухăмĕ малалла вăйланасси, пирĕн малаллахи ĕçсем ăнăçлăн пулса пырасси килеť.

Çулйĕр строиттĕлстви тăрăх Ђăваш респуплĕкĕ пĕтĕм Совет сойусĕпе примерлă, кăтартуллă респуплĕк, тесе каламалла. Епир çулйĕр строиттĕлстви тăрăх пĕрремĕш петтилеткăна 400 прођ. ытла тултартăмăр. Мускав пире куçса çўрекен хĕрлĕ йалав пађĕ.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе илсен, çак çулăн виçĕ кварттăл планне 104 прођђăн тултартăмăр. Анђах халђхи вăхăтра ĕç вуçех те çителĕклĕ мар.

Куљттурă строиттĕлстви фронтĕнђе тунă çитĕнўсем никĕш çĕрти пек те мар пысăк. Нойапĕрĕн 12-ђе Шупашкарта маркçисăм-ленинисăм курсĕ уçăлђĕ. Ку пирĕн партти орканисатсине пĕр пусăм çўллĕшĕ çĕклет. Кун пек курссем Сойусĕпе те мĕн пурĕ иккĕ кăна. Курсра кашни вĕренекен вăтам шутпа уйăхне 225 тенкĕ çтиппенти илет. Ку ĕнтĕ курс мĕн тери пысăк авториттетлă пулни çине кăтартса параť.

Çак çĕнтерўсем, вĕсем пурĕш те клас тăшманĕсем çине талкăшпе наступлени туса пынипе,

парттин ҫулйӗрӗшӗн, ҫак ҫулйӗртен пӑрнакансемпе—оппортунистсемпе икӗ фронтпа вирлӗн кӗрешсе пынипе пулнӑ ҫитӗнӳсем. Пирӗн партти оркарисатси икӗ фронтпа та хайаррӑн кӗрешсе хӑйӗн ӗретне ҫирӗплетсе, хӑйӗн ҫамрӑк катӑрӗсене поҕшевикла пиҫӗнтерсе пыҕӗ. Иртнӗ тапхӑрти ӗҫсем парттин ленинла ҫулйӗрӗ пӗртен пӗр тӗрӗс ҫул пулса тӑнине аван кӑтартса параҫҫӗ.

## Иккӗмӗш петтилеткӑн политтӗкла тата екномӗкла сатаҕӗсем

Пӗрремӗш петтилеткӑна тӑватӑ ҫулта пурнӑҫласа иккӗмӗш петтилеткӑна, классӑр сотсиалисӑмла опҕӗствӑ тӑвас петтилеткӑна кӗретпӗр. Пӗрремӗш петтилеткӑра сотсиалисӑмла екномӗкӗн никӗсне хыврӑмӑр. Иккӗмӗш петтилеткӑра ҫак никӗс ҫинҕе комунисӑмӑн пӗрремӗш тапхӑрне—сотсиалисӑма туса ҫитермелле. Иккӗмӗш петтилеткӑ хӑйӗн сулӑмпе (востействипе) кӑпиталисӑмлӑ ҫӗршывсенҕе пролеттари револҕутси тутармалла (Хытӑ ал ҫупаҫҫӗ).

Иккӗмӗш петтилеткӑн хуҫалӑхла тӗп сатаҕӗвӑл, пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне, халӑх хуҫалӑхӗн пур пайӗсене те ҫӗнӗ техпӗкпа рекконструксилесе ҫитересси пулаť.

Ҫӗршыва интустрилесси малашне те тӗп вырӑн йышӑнса тӑраť. Происвотствӑ хатӗрӗсем (машшинсем) туса кӑларакан промышлӗннӑҫ йертсе пыракан вырӑнта пулаť.

Шултра промышлӗннӑҫ пысӑк ҫитӗнӳсем туни тата йалхуҫалӑх ҕӗрӗ таварӗсен никӗсӗ ҕылай сарӑлни, иккӗмӗш петтилеткӑра ҫӑмӑл промышлӗннӑҫа хӑвӑрт ӳстерме майсем туса паҕӗҫ. Ҫакна май иккӗмӗш петтилеткӑра кашни ҫынна тивекен нормӑ виҫӗ хут ӳсмелле.

Йалхуҫалӑхӗнҕи тӗп сатаҕ—совхоссемпе колхоссен уйхирӗсен тырпул тухӑҫлӑхне пысӑккӑн хӑпартасси тата уйар ҫанталӑкпа кӗрешессине

пољшевикла татасси. Сотсиалисăмла реконструктсилессине туса пе́термелле, тата йалхуҫалăх производствине мехханисатсилессине тĕпрев илсен туса ҫитермелле.

Иккĕмĕш петтилеткăн политтĕкла тĕп сатађ—классене пĕтĕмĕшпех пĕтерессн, класлă уйрăмлăхсене тата експлуаттатсине кăларса тăракан сăлтавсене пĕтерессн, еккономĕкре тата ҫынсен ăстăнĕнђе кăпиталисăм йулашкисене ҫĕнтерессн, пĕтĕм ĕҫхалăхне сотсиалисăмла опђĕствăн ăнланулла, хастарлă строиттĕлĕсем тăвасси.

Паллах, ҫав тери пысăкĕҫе пурнăҫласси хăй тĕллĕн пулса пыма пултараймасть. Сотсиалисăмăн ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсене кăпиталисăм йулашкийĕсемпе татăклăн кĕрешсе ҫеҫ, пĕтсе пыракан кăпиталисла елементсем хирĕҫĕшнине ҫĕмĕрсе пырса ҫеҫ, ĕҫҫыннисем хушшинђе пуршуалла тата вак пуршуалла шухăшсене сирсе пырса, ĕҫҫыннисене сотсиалисăмла вĕрентсе пырас тĕлĕшпе ҫине тăрсах ĕҫлесе ҫеҫ тума пулать. Ку мĕне пĕлтерет?

> „Ку уйрăм тапхăрсенђе, уйрăм районсенђе сотсиалисăм строиттĕлствин уйрăм уђаскисенђе клас кĕрешӳвĕ малалла татах та ҫивĕђленмесĕр тăма пултарайманнине пĕлтерет, ҫакăнпа пĕрлех вăл ĕҫхалăхĕн уйрăм сийĕсемпе ушкăнĕсем хушшинђе пуршуаллă шухăшсем тытăнса тăма пултарассине, хăш ђухне тата вăл шухăш вăйланма пултарассине кăтартать, вăлах рапођђисем хушшине тата парттийе те тата нумай вăхăт хушши пролеттариата хирĕҫ пыракан клас тĕлĕшĕнђен йут шухăшсем кĕме пултарассине кăтартать“ (ПСК(п)П XVII-мĕш конферентсийĕ).

Ҫапла вара пирĕн умра пролеттари тиктаттурине тĕреклетес сатађ, оппортунисăмпа кĕрешессине, уйрăмăнах хаљхи тапхăрта тĕп хăрушлăх пулакан сылтăм сулăнђăка хирĕҫ кĕрешессине малалла та вăйлатса пырас сатађ ҫивĕђђĕн тăрать.

Вăйлăн талкĕшпе наступлени туса пынă май,

клас кӗрешӳвӗн фронђӗ хӗсӗнсе пырат̆. Анђах ку клас кӗрешӳвӗ пӗтсе сӳнсе пырассине пӗлтермест. Клас кӑрешӳвӗ халӗ çивӗђђӗн пырат̆, вӑл иккӗмӗш петтилеткӑра та уйрӑм уђасткӑсенђе, уйрӑм районсенђе, уйрӑм тапхӑрта çивӗђленмесӗр пулмаст̆. Тӑшман ирӗккӗн парӑнманни пуриншӗн те паллӑ пулмалла, вӑл талкӗшпе пыракан сотсиалисӑмла наступленине мӗн пур майсемпе хирӗçӗшет.

„Пӗтсе пыракан классем, вӗсем пирӗнтен вӑйлӑраххипе мар, сотсиалисӑм вӗсенђен хӑвӑртрах ӳссе пынине, вӗсем пирӗнтен вӑйсӑрланса пынине кура пирӗнпе хирӗçӗшеççӗ. Вӗсем хӑйсем вӑйсӑрланса пынине, хӑйсен ӗмӗрӗн йулашки кунӗсене пурӑнса иртернине кура мӗн пур вӑйсемпе, мӗн пур майсемпе хирӗçӗшеççӗ“ (Сталин).

Клас кӗрешӳвӗ халӗ çивӗђђӗн пынине епӗр аван пӗлетпӗр. Клас кӗрешӳвӗ çитес тапхӑрта та çивӗђленмесӗр пулма пултарманнине те пӗлетпӗр. Анђах кӑна пӗлнипех çитмест. Кунсӑр пуçне пирӗн тата клас кӗрешӳвӗн тӗп фронтне, вӑл хӑш уђаскӑра ђи вӑйлӑн пулса пынине пӗлни кирлӗ. Ун пек уђаскӑ халӗ колхос строиттӗлстви пулса тӑрат̆. Колхос строиттӗлстви—клас кӗрешӳвӗн тӗп фронђӗ.

Пирӗн хамӑр çӗршывра тӗп тӑшман кулак пулат̆. Кулакӑн никӗсӗ — вакӑран та вакӑ, сапаланђӑк хресђен хуçалӑхӗсем. Ленин сӑмахӗсемпе каласан „хресђенсем хӑйсен хуçалӑхӗнђе (происвотствинђе) харпӑрлӑхшӑн тӑрӑшнӑ пирки капиталисӑмла йӗркене çӗнӗрен пуçласа йараççӗ“. Епӗр сапаланђӑк хуçалӑхсене шултра, ушкӑнлӑ хуçалӑхсене пӗрлештерсе кулакӑн никӗсне тӗпренех çӗмӗретпӗр, кулак вађђи çӗнӗрен шӑтса çитӗнме вимӗнле вырӑн та хӑвармастпӑр, талкӑшпе колхоса куçнӑ никӗс çинђе кулаксене хӑйсене те класӗпех пӗтеретпӗр. Кулак çакна витӗр ӑнланат̆. Кулак хӑйӗн ӗмӗрӗн йулашки кунӗсене пурӑнса иртернине аван сисет. Кулак хӑйӗн никӗсне çӗмре-

кенпе—колхос строиттӗлствипе—мӗн пур вӑйсемпе, мӗн пур майсемпе кӗрешет.

Пирӗн ӗҫ вӑйсӑр ҫӗрте, поҧшевикла сыхлӑха ҫухатнӑ вырӑнсенҫе, ӗҫ хӑй тӗллӗн пуласса шаннӑ ҫӗрте кулак хӑйулланать, хӑйӗн сӑтӑрлӑ, колхоса хирӗҫле ӗҫне вӑйлатать. Куславкка, Шӑмӑршӑ т. ыт. хӑшпӗр районсенҫи „ӗҫсем“ ҫакӑн ҫинҫен пит те аван каласа параҫҫӗ.

## Клас сисӗмлӗхне ҫухатнӑ ҫӗрте

Сотсиалисӑм ҫӗнтерсе пынӑ, классем хушшинҫе улшӑнусем пулса пынӑ май, клас кӗрешӳвӗн формисем те меслеҫӗсем те улшӑнса пыраҫҫӗ. Хаҧхи тапхӑра илсен, кулак ваҧҧи колхоспа уҫҫӑмӑнах кӗрешме майсем ҫук. Анҫах кулак кӗрешме пӑрахмасть, унтан та ытларах, вӑл хӑйӗн пӗтсе пыракан ӗмӗрне мӗн ҫухлӗ те пулин ҫӑсасшӗн тата хайаррӑнтарах, тата тискеррӗнтерех кӗрешет. Кулак колхос строиттӗлствипе кӗрешес ҫӗрте нимӗнрен те йӗрӗнмест, мӗн май килнӗ ҫавӑнпа усӑ курма тӑрӑшать. Вӑл хӑйӗн вӑйӗсене хӑйне кирлӗ вырӑнсене вырнаҫтарма тӑрӑшать. Кӑна токлатра кӑтартса паракан тӗслӗхсем питрех те аван ҫирӗплетеҫҫӗ.

Пӗремӗш тӗслӗх—Куславкка районӗнҫен. Мало-Пишшӗвӑри „Заря“ колхосри ӗҫсем ҫинҫен есир пӗлетӗр пулмалла, партти Опкомӗ Мало-Пишшӗври ӗҫсем пирки йышӑннӑ решшенине пиҫетре ҫапса кӑларҫӗ.

Мало-Пишшӗвӑра мӗн пулнӑ-ха?

Мало-Пишшӗвӑ йалӗнҫе кулаксем Оҫӗрӑв кулак йертсе пынипе йалсоветне тата „Заря“ колхос правленине сӗрӗнсе кӗнӗ. Ҫапла йалти йертсе пырас вырӑнсене кӗрсе, нумай вӑхӑт хушши совет влаҫӗ тата партти ҫине тивӗҫсӗр йат ӳкерекен тӗрлӗрен киревсӗр ӗҫсем туса пурӑннӑ, хуҫалӑхла—политтӗкла кампанисене иртерес ӗҫе те ҫӑрмантарнӑ. Мӗнле киревсӗр, ирсӗр ӗҫсем тунӑ? Ҫак ку-

лаксен ушкăнĕ колхоçнĕксене тата йетинолиђнĕксене хĕненĕ, саккуна пăсса арĕсленĕ, ухтарусем тунă, хăратнă, штрафсем хунă, пурлăхсене туртса илнĕ, суйа токкумĕнтсем туса вĕсемпе вçаткăллă суту-илŭ тунă, ĕçкĕпе ашкăннă, ĕçсен çапăçнă, кулаксене колхоса илнĕ, çав хушăрах уйрăм ђухăнсемпе вăтамсене колхосран кăларнă, вĕсем çине çирĕп парусем хунă, колхос пурлăхне çаратса пуăннă т. ыт. те.

Кунта çапла факт уйрăмăнах çийеле тухаť. Хăш-пĕр комунистсемпе комсомолĕссем тата партти райкомĕн пŭро кăнтитаđĕ Фомин пулăшнипе, кулаксен ушкăнĕ хăйĕн преставиттĕлне—Оçĕрăв (кулак, ђеђук ывăлне) партти кăнтитатне кŭртнĕ, Фомин Оçĕрăвпа пĕр йалтан, вăл Оçĕрăв кулак пулнине, Оçĕрăвăн ирсĕр ĕçĕсене аван пĕлнĕ. Ăна пăхмасăр, Фомин Оçĕрăва, колхос активисĕ вырăнне хурса, хытă хŭтĕлевĕ, вăл тата райкомăн тепĕр икĕ ђленĕ Оçĕрăва парттине кĕме рекkоментатсисем панă. Райĕçтăвком претçетаттĕлĕ Шумилăв йулташ та Оçĕрăва хŭтĕленĕ, ăна хупса лартнă çĕртен кăларма хушнă. Партти РК пе РКК-те кулаксен ушкăнне таса шыв çине кăларман. Оçĕрăвсене çак çеç кирлĕ пулнă.

Ку мĕн çинђен каласа параť?

Ку районри партти рукковотстви клас сисĕмлĕхне, пођшевикла сыхă тăрассине çухатни, ĕç халăх массисенђен уйăрлса кайни çинђен каласа параť. Ку оппортунисла ĕçлени çине кăтартса параť.

## Тăшман хăйĕн сăтăрла ĕçне пăсăлса кайнă етемсем урлă тăваť

Тепĕр тĕслĕх—Шăмăршă районĕнђи Ђепкас Никкођскăри „ĕçсем“. Ђепкас-Никоđскăри „ĕçсем“ Мало-Пишшĕвăри „ĕçсемпе“ пĕр майлăрахах, тесе каламалла. Кунта та кулакла етемсем ђи малтан вырăнти власа хăйсен аллине çавăрса илеççĕ. Ĕç мĕнрен пуçланса кайаť-ха?

1931-мĕш çулăн майĕ уйăхĕнҫе „Трактăр“ колхос сҫеттовотне пăсăлса кайнăшăн, ĕçкĕне путнăшăн партти ретĕнҫен кăларса сирпĕтнĕ Моросăв кĕрсе ларать. Кулакла етемсем çак пăсăлса кайнă Моросăв урлă хăйсен сăтăрла ĕççене тума тытăваççĕ. Моросăв кулаксем йертсе пынипе, йалти влаçа хăйсен аллине çавăрса илес шутпа тĕрĕс ĕçлекен рапотнĕксене тĕрлĕ майсемпе хĕсĕрленĕ, вĕсене ĕçрен кăларттарса пăрахтарнă. Колхос сҫеттовоҫĕ пулса ĕçленĕ ҫух, Моросăв колхос претçетаттĕлне икĕ расҫен (Паттăв Ваççилипе Ворöпйов Çтеппава) ĕçрен кăларнă. Куратăр-и, вырăнсенҫе мĕнле ĕçсем пулса иртеççĕ, сҫеттовот претçетаттĕле ĕçрен кăларать.

Çаккăнтан кайран колхос претçетаттĕлне Моросăв йевĕрлĕ пйантсă—пăсăлса кайнă Танилăв ларать. Моросăв сҫеттовотран савхоса куçать, сҫеттовота хăйпе пĕрле ĕçкĕ-çикĕсене çӳрекен Прусăва лартать.

Çапла ĕнтĕ колхосра ĕçе татса паракан вырăнсенҫе пур çĕрте те хăйсен çыннисем. Халĕ ĕнтĕ хăйсен сăтăрла ĕçĕсене ирĕклĕрех тума йалсоветне хăйсен аллине йарса илмелле. Ҫăн та вĕсем майĕпе йалсовет претçетаттĕлне Пакланăва тата йалсовет çекреттарне Лукйанăва ĕçкĕсем урлă хăйсен йенне çавăраççă. Халĕ ĕнтĕ йалти влаç пĕтĕмĕшпех вĕсен алинҫе, хăйсем мĕн тăвас тенĕ çавна тăваççĕ.

Мĕн тăваççĕ?

Паллах, ҫи малтан кулаксене хӳтĕлес ĕçе тытăнаççĕ, вĕсене йалхуçалăх валокне интивитуаљнă йĕркепе хурассинҫен, тĕрлĕрен хатĕрлевсем тăрăх çирĕп парусенҫен хăтараççĕ. Сăмахран, Тиххăнăв кулак йалхуçалăх налокĕ 17 тенкĕ те 40 пус тӳлет, çав вăхăтрах красноармейтсă çемйи майĕпе 50проҫҫăнлă çăмăллăхпа усă куракан вăтам хресҫен Корђакков 54 тен. тӳлет. Ку çеç те мар. Кулаксене колхоса иле çĕ. Ĕçхалăх масси çакăн çине кăтартма пуçласан, йаҫĕ пултăр тесе кулаксе-

не колхосран кăларàççĕ, анҫах, ҫăннипе илсен, кулаксем иншенерпа технĕкла рапотнĕкĕсен шуҫĕпе колхосах йулаççĕ.

Малалла, Моросăвсем тата вĕсен хӳттипе колхоса кĕрсе кайнă „иншенерпа-технĕкла рапотнĕксем“, колхос пурлăхне çаратма тытăнаççĕ. Колхос тыррине иртнĕ çул 300 пăта йахăн, кăçал 200 пăт ытла вăрланă. Моросăв сҫеттовот пулса ĕçленĕ ҫух 60 пăт колхос паранкине вăрланă. Пĕрлештернĕ лашасене кайалла тавăрса панă. Колхос ĕçĕсене йухăнҫăкла туса пынă. Сăмахран, çуракине 15 кун вырăнне 25 кун хушши тунă, авăн çапмалли машшинсем пур çинҫен октăпĕрĕн 23-мĕш ҫысли тĕлне çапмалли тырă 1000 лав ытлайулнă, кĕрхи суха тăвассине 40% кăна пурнăçланă т. ыт. те. Пĕтĕм йалхуçалăх çулĕнҫи èççене 10 пин ĕçкунĕпе пĕтерескере 20 пин ĕçкунĕ пĕтернĕ.

Çакăн пек ирсĕр ĕçсем çине кăтартса паракансене Моросăв шайкки хĕнесе тăкнă. Ĕçхалăх массин тишкĕрӳне мĕн пур майсемпе пӳлсе пăҫăртаса пынă.

Есĕр мàнран партти йаҫейкки ăçта пулнă, тесе ыйтма пултаратăр. Ҫăн та партти йаҫейкки ăçта пулнă? Партти йаҫейкки вырăнтах пулнă, анҫах унăн йертсе пыраканĕсем кулак танатинҫе пулнă. Моросăв ушкăнĕнҫе хăйпе Прӳссăвсăр пуçне ыттисем пурĕш те парттийтсăсем пулнă. Кулаксем колхос правленине йалсоветне кăна мар, парттилле сыхлăха çухатнă комуниссене хăйсен йенне çавăрма пултарнă.

Партти райкомĕн çекреттарĕ çак йалтан, „Трактăр“ колхос ҫленĕ. Анҫах колхосри кулакла ĕççене таса шыв çине кăларас тĕлĕшпе вăл та нимĕн те туман.

Çак тĕслĕх мĕн çинҫен калаŧ каллех?

**Ку тĕслĕх каллех, колхос строиттĕлстви тавра клас кĕрешĕвĕ çивĕҫҫĕн пыни çинҫен, клас тăшманĕсем пирĕн наступленине хирĕç мĕн пур вă[illegible]**

семпе, мĕн пур майсемпе кĕрешни çинҫен каласа парать.

Клас сисĕмлĕхне çухатни, ĕç хăй тĕллĕн пуласса оппортунисла шанни, массăран хăпни—клас тăшманĕсене вĕçертсе йарать.

## Тăшман актив сăнĕпе пĕркенет

Виççĕмĕш тĕслĕх—Пăраҫкав районĕнҫи Љупимăвккăри ĕçсем. Малă-Пишшĕвăра кулаксем уйрăм комуниссем, вĕсем çеç те мар, партти райкомĕн уйрăм ҫленĕсем пулăшнипе хăйсен претставиттĕлне Оçĕрăва партти ретне кĕртсе йарççĕ. Ҫепкас-Никколљскăра кулакла етемсем пăсăлса кайнă уйрăм çынсем урлă хăйсен сăтăрлă ĕçĕсене тăваççĕ. Кунта та уйрăм комуниссем, клас сыхлăхне çухатса, кулак танатине кĕрсе ӳкеççĕ. Љупимăвккăри ĕçсен те хăйсен уйрăмлăхĕ пур. Кунта кулакла етемсем хăйсен акĕнҫĕсем урлă вăтам хресҫенсене ирĕксĕрлеççĕ. Йалсоветҫĕ 68 хуçалăха раскулаҫҫит тунă пулнă, вăл йалти пĕтĕм хуçалăхсен хисепĕнҫен 40% йахăн пулать. Ку хисепре вăтам хуçалăхсем те, ҫухăн хуçалăхсем те пулнă. Раскулаҫҫит тунă хуçалăхсен пурлăхне калама çук йӳнĕ хакпа салатса пĕтернĕ. Сăмахран, ҫылай хуçалăха 92 тенке сутнисем пулнă. Йалсовет претçетаттĕлĕ Фатейĕв тата партти йаҫейккин çекреттарĕ пулса ĕçленĕ Раскасăв хăйсен ĕнисене раскулаҫҫит тунисен лайăх ĕнисемпе улăштарнă (Раскасăв икĕ ĕне усрать). Хресҫенсене нимĕнсĕр-мĕнсĕр арĕслесе, икшер талăк клатовойа хупса усранисем пулнă, çĕрле ухтарусем тунă, йалсовет ҫленĕсене ирĕксĕрлесе, хăратса пĕтерсе колхоса кĕме хушнă. Партти райкомĕн уйрăм упполномоҫҫăннăйĕсем пăрăнҫăксене тӳрлетес ҫух, хăйсем пăрăнҫăксем тума пулăшнă.

Çак йалта районри рукковотиттĕлсем те сахалах мар пулнă. Мĕнле-ха, вĕсем те çак киревсĕр ĕçсене тупса палăртма пултарайман? Пăрăнҫăк тăваканĕсем, мароҫорсем (раскулаҫҫит тунă пур-

лăхсене çаратакансем) хăйсем тавра 20—30 çынтан актив пĕрлештернĕ. Районран пĕр-пĕр упполномоҫҫăннăй пырсан, çак „актив“ пĕр самантра пухăннă. „Актива“ йертсе пыраканĕсем районран пынă йулташа „пирĕн ĕçсем пур çĕрте те лайăх пыраççĕ“, тесе тыттарнă, „актив“ çакна çирĕплетсе пынă, çав хушăрах ыттисене çăвар та уçтарман. Районран пынă упполномоҫҫăннăй, „актив“ сăмахĕсене ĕненсе, ĕçĕн ăшне кĕрсе пăхма тăрăшман. Çак йенҫен илсе пăхсан, Љупимăвккăри урок пит те вĕрентўллĕ урок пулмалла. Клас тăшманĕсем, йалти актив хисепне сĕрĕнсе кĕрсе, пĕр йенҫен, актив йаҫĕпе хăйсем пĕркенсе тăраççĕ, тепĕр йенҫен—актива шал йенҫен салатма тăрăшаççĕ.

Пăраҫкав районĕнҫи ĕçсем ăнсăртран сиксе тухнă йапала мар. Пăраҫкав районĕн историйĕ такçантанпах тăсăлат. Партти рукковотствине улăштарнă хыççăн ҫăн та ҫылай çитĕнўсем пулҫĕç. Çуракине, кĕракине тата тырпул пухса кĕртессине вăхăтра иртернĕ. Колхоссем тырпул хатĕрлев планне октапĕрĕн 1-мĕшне 117% тултарнă т. ыт. те.

Анҫах çĕнĕ рукковотствă кивĕ рукковотствă ҫухнехи çитменлĕхсене, парттин çулйĕрне пăсса ĕçленисене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕклĕ мерăсем йышăнман. Райком çекреттарне Çелеçҥов йулташа партти Опкомĕ Шупашкартан йанă. Çелеçҥов ĕçре тĕрĕсленĕ комунис. Анҫах Çелеçҥов йул. малтанхи, кивĕ йăнăшсене кирлĕ таран шута илмен. Тепĕр йенҫен, вырăнти актив Çелеçҥов йулташа кирлĕ таран пулăшу паман. Çакăн пирки ĕнтĕ Љупимăвккăра киревсĕр ĕçсем пулма пултарнă, вĕсене районри рукковотствă Опкомпа ОКК комиççийĕ пыраҫҫен тупса палăртайман.

## Пол ттĕкла урок туман пулнă

Тăваттăм отĕслĕх,—Канаш районĕ çинҫен. Тăвай йалĕнҫи „Авас“ колхос претçегаттĕлне суйланмасăр-мĕнсĕр, ватă хут сутпа айăпланнă ху-

ликан Никкифăрăв кĕрсе ларат. Уясăр пуçне колхос правленине ĕçкĕ ăшне путнă „комунис“ Наумăв, тата сурăх тирĕпе витĕнне кашкăр—кулак И. Ђернов кĕрсе кайаççĕ.

Сасă: Кун çинђен епĕр, канашсем, нимĕн те илтмен.

Петров: Илтмен пулсан пит те йапăх. Мĕншĕн илтменнине епĕ сире малалла каласа парăп.

Никкифăрăвсем прикатирсене те хăйсен майлă çынсенђен лартаççĕ. Ђепкас-Никкољскăри пекех, Никкифăрăвсем майĕпе йалсовет претçетаттĕлĕпе çекретгарне хăйсен йенне çавраççĕ. Ђепкас-Никкољскăра сђеттовот колхос претçетаттĕлне ĕçрен кăларма пултарнă. Кунта, Тăвай йалĕнђе колхос претçетаттĕлĕ йалсовет претçетаттĕлне арестленисем пулнă.

Никкифăрăв ушкăнĕ уйрăм колхоçнĕксене хĕненĕ, ĕçсе ӳсĕрĕлсе хуликанла ĕçсем тунă, йетинолиђнĕксем çине штрафсем хунă. Никкифăрăв пĕррере урараи ӳкес пек ĕçсе ӳсĕрĕлсе, Фетăрăва „мана хăвăн 16 çулхи хĕрне пĕр çĕр каçмаллăх пар, хĕрне памасан раскулађђит тăватпăр“, тесе хăратнă. Фетăрăв килĕшмен. Никкифăрăв Фетăрăва хĕнесе тăкат.

Малалла. 1931-мĕшпе 1932-мĕш çулсем хушшинђе 26 лаша пуснă, ут тавраш̆ĕсене, çуна-урапасене çĕмĕрсе пĕтернĕ. „Актив пухăвĕсем“ тесе йат панă пухусенђе Никкифăрăвсемсĕр пуçне 3—4 çынтан ытла пулман.

Районри оркăнсем çак колхосăн ĕçĕсем çинђен пĕлнĕ-и? Пĕлнĕ, анђах ăна тивĕçлипе хак паман, çавăнпа нимĕнле мерă та йышăнман. ПСК(п)П ОКК-пе „Канаш“ хаçат комиççийĕ çак ĕçе тĕрĕслене хыççăн, комиççи вывăђĕсене октапĕрĕн 14-ђе ПСК(п)П райкомĕ сӳтсе йават. Анђах партти райкомĕ кунта та йапалана хăй йађĕпе ђĕнме хăйаймаст. Райкомăн решшени партти оркăнисатсине кулаксемпе, вĕсен акĕнђĕсемпе—оппортуниссемпе кĕрешме мопилисатсилекен решшени мар,

решшени „Хавас“ колхосра пулса иртнĕ ĕçсене политтĕкла хак памасť, решшенин тӳрђĕ çук. Çитмениине райком хăйĕн решшени çинђен партти активне каласа паман, Тăвайри „ĕçсенђен“ политтĕкла урок туман. Çавăнпа та ĕнтĕ есĕр „кун çинђен нимĕн те илтмен“, тетĕр.

Пиллĕкĕмĕш тĕслĕх—Сĕнтĕрвăрри районĕнђен. Ĕсмĕл-пасар пухăнакан йал. Ку йалта çпеккуђантсем, шинккарсем тата хуликансем ђылай. Çакна май районри оркăнсен Ĕсмĕлти колхос çине уйрăмăнах хытă çавăрăнса пăхмалла пулнă, анђах вăл пулман. Çакна пула колхоса тата унăн правленине йут етемсем, пăсăлса кайнă хуликанла етемсем кĕрсе кайнă. Купанăв хуликанла ушкăнĕ урлă колхос правлени колхоçнĕксене, йетиполиђнĕксене хăратса, хĕнесе, колхос пурлăхне çаратса пурăннă: кĕреçе çăнăхне çпеккуђантсене сутнă, колхосăн укçи-тенкине хăйсен çумне ђиквĕ, тырра ампара хунă ђух, тараса çинђе виçнĕ çĕрте тыр-пулла вăрланă т. ыт. те. Кулакла етемсем колхоса усал йата кăларас тĕлĕшпе нимĕнле майсенђен те йĕрĕнмен. Ĕсмĕлти кулаксем хуликанла етемсем урлă мĕн хăтланнă-ха? Ĕсмĕлте ерех лавкки пур. Хуликанла етемсем кӳршĕ йалсенђен пынă çынсенђен „ђеретре тăмасăрах ерех илсе паратпăр“, тесе укçа-тенкĕсем илнĕ. Ерехне илсе хăйсем ĕçсе йанă, ерех илме укçа паракансене хĕнесе пĕтернĕ

## Клас тăшманĕсем çамрăксене хăйсем йенне çавăрма хăтланаççĕ

Халĕ кăна асăннă тĕслĕхсем колхос строиттĕлстви тавра клас кĕрешĕвĕ тĕрлĕ йенсемпе пулса пыни çине кăтартса параççĕ. Кулаксем т. ыт. клас тăшманĕсем пире хирĕç тĕрлĕ майсемпе кĕрешеççĕ. Асăннă тĕслĕхсемсĕр пуçне тата Улатăр районĕнђи тĕслĕхсем çинђе ђарăнса тăмалла пулаť. Улатăр районĕнђе хăш-пĕр йалсенђе кулакла етемсем йалти уйрăм активиссен, уйрăмăнах ком-

сомолĕссемпе комсомолта тăман çамрăксен хастарлăхне хуçалăхпа-политтĕкла кампанисене ртерес çĕртен айаккалла сирес тĕлĕшпе питĕ пĕлсе ĕçленĕ. Вĕсем ку тĕлĕшпе кивĕ йăласемпе, кивĕ хăнăхусемпе, кивĕ йĕркесемпе мĕн май килнĕ таран усă курма тăрăшнă. Кулак тата пуп аҁисем уйрăм комсомолĕссене, уйрăм çамрăк активиссене ĕçке ҁĕннĕ, улахсене (веҁҁеринки) йавăçтарнă, колхоса тата совет влаçне хирĕç сырнă ҁастушкăсем йурлама вĕрентнĕ, совет влаçне хирĕçле анектотсем каласа панă т. ыт. те.

Кулак аҁисем малтан комсомолĕссемпе улахсенҁе ĕçвĕ, кайарах хăйсен килĕсене ҁĕннĕ. Çапла ĕçкĕ-çикĕ, улахсем, Совета хирĕçле анектотсемпе ҁастушкăсем урлă кулакла етемсем уйрăм активиссене, уйрăм комсомолĕссене хăйсем йенне çавăрса, вĕсен политтĕкла хастарлăхĕпĕ хуçалăхпа политтĕкла кампанисемшĕн кĕрĕшес çĕртен сирсе пынă. Сăмахран, Кивĕ Айпеçри комсомолĕссем кулаксем колхос çинҁен, Ленин çинҁен мăшкăллаcа сырнă ҁастушкăсене йурланă.

Миреҁккă йалĕнҁе Ҁуварлейрен пынă сын Çемсков урам тăрăх Совета хирĕçле, хуликанла ҁастушкăсем йурланă. Миреҁккăри комсомолĕссем Çемсковран:

— Есĕ мĕншĕн кун пек киревсĕр йурăсем йурлатăн? тесе ыйтнă.

--Мана йурлама хушрĕç, тесе ответлет Çемсков.

Кам хушнă? Паллах, совета хирĕçле етемсем хушнă, вĕсем куллен ĕçлесе Çемскова хăйсен çулĕ çине тăратма пултарнă.

— Сирĕн Ҁуварлейра комсомолĕссем мĕн пăхаççĕ? тесе ыйтаççĕ Миреҁккăри комсомолĕссем.

— Пирĕн Ҁуварлейре комсомолĕссем политтĕк тĕлĕшĕнҁен нимĕн те пĕлмеççĕ, вĕсем нихçан та пире хирĕç пулман,—тесе хурат Çемсков.

Ҁăн та, хуçалăхпа политтĕкла кампанисене иртерес йенҁен илсен, мĕн куратпăр?

Улатăр районĕ йулса пырат. Тырпул хатĕр-

лев планне Ђуварлей, Клатпишђи, Мireђкă, Пĕрмайтан, Иђкасси, Алттышĕвă т. ыт. йалсем халĕ те тултарса çитереймен. Укçа-тенкĕ пухассите, технĕклă кулђттурсем хатĕрлесси те йапăх пырат. Çпеккулђатсипе кĕрешни çукпа пĕрех темелле.

Улатăрти тĕслĕхсем мĕн çине кăтартса параççĕ? Вĕсем комсомолĕссем хушшинђе ĕç çителĕклĕ марри, комсомолĕссен итейлăхпа политтĕк виçиĕ айалта тăни, çакна май уйрăм комсомолĕссем клас тăшманĕсемпе йавăçса кайни çине кăтартса параççĕ. Вĕсем клас тăшманĕсем çамрăксене хăйсен йенне çаврас тĕлĕшпе хытă ĕçлени çине кăтартса параççĕ. Йулашкинђен, вĕсем комсомол йађейккисене çителĕклĕ йертсе пыманни, çителĕклĕ пулăшманни çине кăтартса параççĕ.

Клас тăшманĕсем комсомол сотсиалисăм строиттелствинђе мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине, комсомолăн пуласлăхне аван ăнланаççĕ. Комсомол йалта ђăн та политтĕкла пысăк вăй пулса тăрат. Çак политтĕкла вăйпа кирлĕ пек усă курас тесен, пирĕн комсомолĕссене йертсе пырассине, вĕсене пулăшассине ђăнласах вăйлатмалла. Комсомолĕссен итейлăхпа политтĕкла виçине хăпартас, вĕсене маркçисла-ленинла теорипе хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлемелле. Комсомолĕссен хăстарлăхне клас тăшманĕсемпе тата вĕсен акĕнђĕсемпе-оппортуниссемпе кĕрешме, колхоссене тĕреклетессишĕн кĕрешме мопилисатсилемелле.

## Çаксем вĕсем мĕнле пулма пултарнă?

Епĕ илсе кăтартнă вырăнсенђе, пур çĕрте те тенĕ пекех, кулакла етемсем вĕсене пĕр йăйăпламасăр ђылай вăхăт хушши колхоссене аркатас тĕлĕшпе темĕн тĕрлĕ киревсĕр, сăтăрла ĕçсем туса пурăннă. Пур çĕрте те партти йађейккисем, комсомол йађейккисем пур, йалсовеђĕсем пур, колхоссенђе ђăн-ђăн активиссем-утарнĕксем сахал мар, районра партти, совет, колхос, сутпа çлетст-

ви оркӑнӗсем пур. Ҫапах та кулакла хуликанла етемсем мӗн майпа пӗр наккасанисӗр ашкӑрса пурӑнма пултарнӑ? Ку ыйтӑва хирӗҫ партти Оп комӗн Малӑ-Пишшӗври „ӗҫсем" тӑрӑх йышӑннӑ решшенире татӑклӑ ответ панӑ. Унта ҫапла калавӑ:

„Вӑл ӗнтӗ районри партти рукковотстви клас сисӗмлӗхне, пољшевикла сыхӑ тӑрассине ҫухатнине колхоҫнӗксен тата уйрӑм хуҫалӑхла ӗҫхресђенӗсен йышлӑ массинђен уйӑрӑлса кайнине, сылтӑм оппортунисла ӗҫленине кӑтартат, ӑна пула Куславкка районӗ хуҫалӑхпа политтӗкла пысӑк кампанисен—тырпул хатӗрлессин, кӗрхи ҫӗртме тӑвассин, укҫа-тенкӗ пухассин планӗсене, тата Куславккари ҫуртйӗр хатӗрӗсем тӑвакан савӑтӑн промфинпланне тултарас ӗҫре прорыва кӗрсе ӳкнӗ."

Ђӑн та, ӗҫ мӗнле пулса пынӑ-ха? Токлатра асӑннӑ „ӗҫсене" пурне те партти Опкомӗ йе Оплӑҫ Контрољ Комиҫҫийӗ тупса палӑртнӑ. Ҫак „ӗҫсем" пурӗш те районри оркӑнсем умӗнђен иртсе кайнӑ.

Тен, ку „ӗҫсем" ҫинђен районри оркӑнсем пӗлмен пулӗ? Ҫук, районри оркӑнсем пӗлнӗ. Сӑмахран, Малӑ-Пишшӗвӑри колхоҫнӗксемпе йетиволиђнӗксем Оҫӗрӑвӑн кулакла ушкӑнӗ саккуна хирӗҫле хӑтланни, тӗрлӗрен мӑшкӑлани ҫинђен райколхоссойуса, райкома, райӗҫтӑвкома, ҫлетстви оркӑнӗсене тата вырӑнти партти йађейккине темиҫе хут та шалӑпӑсем панӑ. Анђах районри оркӑнӗсенђи оппортунисла тата пӳрократла етемсем ӗҫҫыннисен шалӑписем ҫине тивӗҫлипе пӑхман, вӑл ҫеҫ те мар, хӑшӗсем (Фомин) Оҫӗрӑва уҫҫӑмӑнах пулӑшнӑ. Ӗҫҫыннисен шалӑписем ҫине оппортунисла, пӳрократла пӑхни кулаксене пушшех те ҫунатлантарнӑ, шалӑпӑ паракансене хӗсӗрлеме ҫул уҫса кӑна панӑ.

Халӗ тата Пӑрађкав районне илер. Љупимӑвккӑри т. ыт. йалсенђи колхоҫнӗксемпе йетинолиђнӗксем кулаксен киревсӗр, саккуна хирӗҫле

ĕçĕсем çинҫен районри оркăнсене пĕлтермен-и вара? Пĕлтернĕ, пĕрре кăна мар пĕлтернĕ. Райĕç·тăвкомра 600 шалăпă ытла пухăннă. Райкомпа райĕçтăвком шалăпăсене тĕплĕн тĕрĕслес выранне, выранĕсене ҫас-ҫасах тройккăсем йанă. „Тройккă" сăмах Пăраҫкав районĕнҫе практĕккăна кĕрсе вырнаçнă. Йалсенҫе районран йе респуплĕк ҫентăрĕнҫен пĕр çын пырсан та „тройккă килҫĕ" теç·çĕ. Тройккăсем пĕр ĕçе те вĕçне çитермен, унтан та нумайтарах, ĕçсене пушшех те пăтратса пĕтернĕ.

Шăмăршă районĕнҫе районри оркăнсем Ҫеп·кас Никољскăри ĕçсем çинҫен пĕлнĕ-и тата? Пĕлнĕ, сутпа çлетстви оркăнĕсем ку ĕç тăрăх пĕрре кăна мар ĕçсем те пуçарса йанă. 1932 ç. йанвар уйăхĕнҫен пуçласа çентапĕр уйăхне çитеҫҫен Ҫеп·кас-Никкољскăри кулаксемпе хуликансем çинҫен кашни уйăхрах пĕр йе икĕ ĕç пуçарнă. 1931 ç. çентапĕрĕн 14-ҫе Моросăв 20 пăт колхос парап·кине илни çинҫен, тата çынсене хĕненисем çинҫен ĕç пуçарнă. Унтан кайран акă мĕнле ĕçсем пуçарнă:

1932-мĕш çулта йанварĕн 19-ҫе Моросăв хули·канланса вăрçса çӯрени çинҫен;

Мартăн 21-ҫе йалсовет претçетаттĕлĕ Пакла·нăв П. кулака суйа справкă пани çинҫен;

Апрелĕн 21-ҫе колхос тыррине вăрлани çинҫен;

Майăн 2-ҫе йалсовет претçетаттĕлĕ Пакланăв, колхос претçет. Танилăв тата колхос сҫеттовоҫĕ Пруссăв ĕçсе ӯсĕрĕлсе хуликанланса çӯрени çин·ҫен;

Ийулĕн 22-ҫе йалсовет претçетаттĕлĕпе çек·реттарĕ кулакла хуçалăхсене çирĕп парăмсенҫен хăтарни çинҫен;

Авкустăн 8-ҫе Моросăв, Танилăв тата Лукйа·нăв колхосçнĕксене хĕнени çинҫен;

Авкустăн 11-ҫе Пакланăвпа Лукйанăв çирĕп сатани хунă кулаксем патĕнҫе ĕçкĕре пулни çин·ҫен;

Çентапĕрĕн 23-ҫе Танилăв, Моросăв, Пруссăв

ĕçсе ӳсĕрĕлсе хĕрарăма тапăнни çиҫен т. ыт. те. Сутпа çлетстви оркăнĕсем ĕç пуçарнă та, вĕçне çитермесĕрех ĕçе архива персе ҫикнĕ.

Тепĕр тĕслĕх. Партти Опкомне Патăрйел районĕнҫи Çĕрпӳйел йалсоветне кĕрекен Аслă-Çĕрпӳйел йалĕнҫи тата çав йалти колхосри киревсĕр ĕçсем çинҫен çырса пĕлтерне çыру килҫĕ. Çак çырăва илсенех епĕ ПСК(п)П райкомне çыру çырса, çырура çак ĕçе хăвăрт тĕрĕслесе ответ пама хушрăм. Райком çекреттарĕ ман çырăва илет те, ресоҌутси хурса РКК-не ăсатат. ПСК(п)П РКК-йе вырăна тухса лару иртерет, райком пырса та тĕкĕнмест. Куя хыççăн партти Опкомне виçĕ сăмах çырнă перускă хуҫĕ пек хут тăрататççĕ.

Нумайĕшĕн пуçĕнҫе йалсенҫе пулса иртекен киревсĕр ĕçсем çине иртнĕ тапхăрпа пăхни çирĕп ларат. Ҫăвашсен „ĕçсен ӳссĕр кам пулмасть, ура шусан кам ӳкмест, ӳкнĕ çĕртен кам тăмасть", тенĕ йурă пур. Йалсенҫе пулса иртекен ĕçсем çине те ҫылайĕшĕсем çапла пăхаççĕ: „Пĕри ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ, ӳсĕр пуçпа пĕр-пĕринпе вăрçнă, тата пĕри пĕр пăт тырă вăрланă. Кунта мĕнех тĕлĕнмелли пур, ун пек ĕçсем пайан кăна пулман, вăл йалта куллен пулса иртекен ĕç", тесе калаçкалаççĕ.

Çакăн пек сĕпĕлтетекенсем „куллен пулса иртекен ĕçсем" хӳтлĕхĕнҫе кулак тăнине, кулак совет стройĕн никĕсне—опҫăллă пурлăха тапăннине, кулак колхоса аркатассишĕн кĕрешнине курасшĕн мар. Кулакла етемсем тĕрлĕрен преступленисем, хуликанла ĕçсем, тĕрлĕрен ирсĕр ĕçсем тунинҫе, укçа-тенкĕлле йе ерехле уйрăм çынсене çавăрнинҫе, спеккуҌатси сарма пăхнинҫе „хăйсене кăтартаççĕ".

Куславкка, Шăмăршă т. ыт. районсенҫи „ĕçсенҫен" пирĕн тивĕçлĕ, поҌшевикла урок туйанмалла. Вĕсем пире класлă сисĕмлĕхе, поҌшевикла сыхă тăрассине татах та ӳстерме, клас тăшманĕсемпе тата оппортунисcемпе кĕрешессине татах вăйлатма хушаççĕ.

## Сотсиалисӑмла пурлӑх вӑл—таса, тата ӑна никам та тӗкӗнме пултараймасӑ

Куславкка, Шӑмӑршӑ т. ыт. районсенђи ӗҫсем мӗн ҫинђен каласа параҫҫӗ?

Пӗрремӗш, вӗсем сотсиалисӑмла пурлӑха пӑсни ҫине кӑтартса параҫҫӗ.

Иккӗмӗш, вӗсем кулаксем колхос строиттӗлствипе мӗн пур майсемпе, мӗн пур вӑйсемпе кӗрешни ҫине кӑтартса параҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш, уйрӑм парттийтсӑсем пӑсӑлса, кулаксемпе сыхӑнса кайни, вӗсем уҫҫӑмӑнах кулаксене хӳтӗлени ҫине кӑтартса параҫҫӗ.

Тӑваттӑмӗш, оппортуниссем, пӑсӑлса кайнӑ хуликанла етемсем урлӑ кулаксем колхоҫнӗксене тата уйрӑм хуҫалӑхла ӗҫхресђенӗсене тӗрлӗ майсемпе хӗсӗрлени, мӑшкӑлани ҫине кӑтартса параҫҫӗ.

Пиллӗкӗмӗш, хӑшпӗр районри оркӑнсем полђшевикла сыхлӑха ҫухатни, ӗҫҫыннисен шалӑписем ҫине пӳрократла пӑхни ҫине кӑтартса параҫҫӗ.

Йулашкинђен, ҫак „ӗҫсем“ сотсиалисӑмла пурлӑха сыхлас тӗлӗшпе сутпа ҫлетстви оркӑнӗсем ҫителӗклӗ ӗҫлеменни ҫине кӑтартса параҫҫӗ. Совет стройӗн никӗсӗ—опђӑллӑ пурлӑх. Ҫак никӗс ҫинђе епир классӑр, сотсиалисӑмла опђӗствӑ тӑватпӑр. Ҫак пурлӑха ӳстерсе тӗреклетсе пырсан кӑна епир классӑр, сотсиалисӑмла опђӗствӑ тума пултаратпӑр.

Куславкка т. ыт. хӑшпӗр районсенђи „ӗҫсем“ клас тӑшманӗсем Совет стройӗн никӗсне—опђӑллӑ пурлӑха тапӑнма пӑхни ҫине кӑтартса параҫҫӗ.

Кулак сӑтӑрлӑ, совет влаҫне хирӗҫле ӗҫе пур ђухне те кӑйӗн аллипе ҫеҫ тумасӑ, вӑл ђас-ђасах кайа йулнӑ елементсем, пӑсӑлса кайнӑ, хуликанла етемсем урлӑ ӗҫлет. Партти ретӗнђи оппортуниссем тата пӳрократсем кулаксене пулӑшаҫҫӗ.

Сотсиалисӑмла происвотствӑра ӗҫлемесӗр, ӗҫҫыннисен шуђӗпе пурӑнма пӑхакансем валђи

нимĕнле вырăн та çук. Сотсиалисăмла пурлăха харам пырсем, параçитсем тапăнасран пит те хытă сыхланмалла. Опђăллă пурлăха сыхланинђен тата урăх ђыслă, пархатарлă сатађ пулма пултарать-и? Йе тата пирĕн строй̆а хавшатма хăтланнинђен, опђăллă пурлăха çаратнинђен тата урăх йăвăр преступлени пулма пултарать-и? Çук, пулма пултараймасть. Çавăнпа ĕнтĕ Совет правиттĕлстви хăйĕн постановленинђе опђăллă пурлăха çаратакансене персе пăрахмалла, йе айăпа çăмăллатакан майсем пулсан персе пăрахас вырăнне 10 çуллăха хупса лартмалла тата пĕтĕм пурлăхне туртса илмелле, тесе кăтартса пађĕ.

Пуршуаçи хăйĕн харпăрлă пурлăхне тапăнакансене айăплас тĕлĕшпе темĕн тĕрлĕ майсем шыраса кăларнă: темĕн пысăккĕш тĕрмесем, касаматсем, ĕмĕрлĕхе катăркăна йарасси, çакса вĕлересси, електритсă пуканĕ çине лартса вĕлересси, персе пăрахасси т. ыт. те. Пуршуаçи ĕççĕр, выçăхлăха тăрса йулнă рапођђисене хăйсен прависемшĕн кĕрешнĕшĕн пађки-пађкипе тĕрмене хупать, персе вĕлерет.

Йенђен, пуршуаçи саккунĕсем харпăрлă пурлăха сыхлаççĕ пулсан, пирĕн револђутсиллĕ саккунлăх сотсиалисăмла пурлăха сыхлать. Пирĕн опђăллă пурлăха пуршуаçи хăйĕн пурлăхне сыхланинђен аван сыхламалла.

Пирĕн условисенђе вăрăхурахлă çул çине контрреволђутсионерсем, сăтăрçăсем, кулаксем, çпеккулђантсем, шулђăксем тата мароторсем тăраççĕ. Вĕсем опђăллă пурлăха çаратса, вăрласа, пăсса çĕмĕрсе, вут тĕртсе çунтарса капиталисла йĕрке-сене калла таврассишĕн кĕрешеççĕ.

Опђăллă ушкăнлă пурлăх колхосăн никĕсĕ пулнине кулак аван ăнланать.

Кулак тата çынсем шуђĕпе пурăнма йуратакан харам пырсем вăрласа, çаратса, вутпа çунтарса колхос пурлăхне салатса колхосăн тупăшлăхне ђакарма, ĕçкунĕсем тăрăх паракан нормăна пĕђĕк-

летме, ҫапла майпа колхоса арқатса йама тӑрӑшаҫҫӗ. Малӑ-Пишшӑвӑри, Ђепкас-НикоЂскӑри, Тӑвайри т. ыт. ҫӗрти „ӗҫсем“ ҫак шухӑша аван ҫирӗплетеҫҫӗ.

Ленин калать:

„Кивӗ опЂӑлӑх пӗтнӗ Ђухне, унӑн ӳтпӳне тупӑка шаккаса лартса шӑтӑка хумалла мар, вӑл пирӗн хушӑра ҫӗрсе ишӗлет, вӑл сӗрет, тата пире хамӑрах ҫав Ђире йертет“.

ЙенЂен ӗҫхалӑх массин нумай пайӗшӗн опЂӑллӑ пурлӑх ҫывӑх, таса тата ӑна никам та тӗкӗнмелле мар пулса тӑрать пулсан, ку вӑл ӗҫҫынnисен хушшинЂе сотсиалисӑмла пурлӑх ҫине „мӗнле те пулин пысӑкрах татӑк йарса илес те тарас“ тесе пӑхаканӗсем ҫук тенине пӗре те пӗлтермест. Ӗҫҫыннисен хушшинЂе ун пеккисем пур-ха. Кулакла етемсем пур майсемпе те ҫак туртӑма ЂӗртсӗЂ йама тӑрӑшаҫҫӗ. Пирӗн Ленин сӑмахӗсемпе каласан клас тӑшманӗсемпе те тата хамӑр хушӑрти ҫӗнӗ йӗрке тӑвас ӗҫе Ђӑрмантаракан, сӑтӑр тӑвакан етемсемпе те нимӗн шеллемесӗр кӗрешмелле.

Ленин акӑ мӗн калать:

„Пуршуйсемпе шулӗксем, вӗсем пӗр меҭалӗн икӗ йенӗ, вӗсем—кӑпиталисӑм тӑрантарса ҫитернӗ харам пырсен икӗ тӗп уйрӑмӗ, вӗсем сотсиалисӑмӑн Ђи пысӑк тӑшманӗсем. Ҫав тӑшманӗсене пӗтӗм халӑх куҫӗ умӗнЂе уйрӑм тытса тӑмалла, сотсиалисӑмла опЂӗствӑ йӗркисемпе саккунӗсене пӑртак ҫеҫ пӑссан та вӗсене пӑЂӑртаса пӑрахмалла. Ҫак тӗлӗшрен хӑть мӗнле те ҫемҫелсе тӑни, хӑть мӗнле иккӗленни, вӗсемпе йӑвашшӑн ҫураҫтарса ӗҫлени сотсиалисӑм умӗнЂе питӗ пысӑк айӑпа кӗни пулать“.

Пролеттари тиктаттурӗ оркӑнсен сотсиалисӑмла пурлӑха вӑрлакансемпе, ҫаратакансемпе Ленин вӗрентнӗ пек кӗрешмелле. Ку тӗлӗшпе сутпа ҫлетстви оркӑнӗсем уйрӑмӑнах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. АнЂах вӗсем халӗ ҫителӗклӗ кӗрешмеҫҫӗ. Сутпа ҫлетстви оркӑнӗсенЂи оппор-

тунисла етемсем „кулака ҫапасси ҫапатпӑр та, револютсиллӗ саккунлӑха пӑсас мар“, тесе хӑйсен оппортунисла ӗҫӗсене револютсилле саккунлӑх пӳркенҙӗкӗпе хӳтлеме хӑтланаҫҫӗ. Револютсилле саккунлӑха пурнӑҫа ҫирӗп кӳртсе пырсан кӑна епир пролеттари тиктаттурине тӗрӗклетме, ӗҫхалӑхӗн интересӗсене сыхлама, ӗҫхалӑхӗн тӑшманӗсемпе, вӗсен контрреволютсилле акӗнҙӗсемпе хайаррӑн кӗрешме пултаратпӑр. Сут оркӑнӗсен ӗҫне вӑйлатас тӗлӗшпе Йуҫтитси халӑх кӑмиссариаҙӗн халех тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла.

## Ӗҫе урӑхлатса ҫӗнетесси тата татӑклӑн йертсе пырасси ҫинҙен

Куславкка, Шӑмӑршӑ т. ыт. районсенҙи пулса иртнисем йалхуҫалӑхне йертсе пырассине татах аванлатма кирли ҫине кӑтартса параҫҫӗ. Епир ку ыйтӑва партти Опкомӗн 3-мӗш пленӑмӗнҙе тӗплӗн сӳтсе йаврӑмӑр. Пленӑм пулса иртнӗреппе мӗнле те пулин хускану пур-и? Паллах, хускану пур. Хускану пулман пулсан епир ҫав тери пысӑк ҫитӗнӳсем те туман пулӑттӑмӑр. Пирӗн йертсе пырас ӗҫ тӗлрен илсе тӗрӗс урӑхланса ҫӗнелсе пыраҭ. Епир ку тӗлӗшпе питрех те пысӑк оппӑт туйантӑмӑр. Епир тӗпрен илсен, хамӑр ӗҫе урӑхлатса ҫӗнетме вӗрентӗмӗр. Кунта хамӑрӑн ӗҫе йертсе пырассине татах аванлатасси ҫинҙен сӑмах-халап пыраҭ. Пирӗн умра пахалӑх тӗлӗшпе татах та пысӑк сатаҙсем тӑраҫҫӗ. Йертсе пырас ӗҫе урӑхлатса ҫӗнетесси ҫине пӗр тапхӑрта туса хумалли ӗҫ ҫине пӑхнӑ пек пӑхмалла мар. Пирӗн ума ҫӗнӗрен ҫӗнӗ сатаҙсем тухса тӑраҫҫӗ. Ҫакна май—пирӗн татӑклӑн йертсе пырассине урӑхлатса ҫӗнетсех пымалла. Йертсе пырас ӗҫӗн пахалӑхне епир хамӑрӑн ӗҫе пӑхса пахалатпӑр. Есӗ темӗн пекех ӗҫлетӗн, анҙах санӑн план пурнӑҫланмасӗ пулсан, санӑн ӗҫӳ пасар кунӗ те виҫӗ пус тӑмасӗ. Куславккари йулташсем те ӗҫлемен мар, ӗҫленӗ. Анҙах вӗсем

Мала́-Пишшӗври „ӗҫе“ хӑйсен умӗн иртерсе йанӑ. Партти Опкомӗ район рукководствине салатса йарса ҫӗнӗ ҫынсем лартрӗ.

Шӑмаршӑри йулташсем те ӗҫлемен мар, ӗҫленӗ. Анҫах Ҫепкас-Никольскӑри „ӗҫе“ хӑйсен умӗн иртерсе йанӑ. Партти Опкомӗ райком ҫекреттарне тата районӗҫтавком претҫетаттӗлне ӗҫрен кӑлармалла турӗ. Партти Опкомӗ ытти районсене ҫакӑн пек пуласран шутсӑр хытӑ асӑрхаттарать.

Йертсе пырас ӗҫри тӗп ҫитменлӗхӗсенҫен пӗри вӑл, ӗҫе пӗтӗмӗшпе илсе туни пулать. Кашни ыйту патне татаклӑн пыни ҫитмест. Ыйтусене пӗтӗмӗшпе йарса илеҫҫӗ, пӗтӗмӗшпе илсе решшени йышанаҫҫӗ, пӗтӗмӗшпе илсе пурнӑҫлассине тӗрӗслеҫҫӗ. Ҫакӑн пек ӗҫленине пула ҫас ҫасах ҫапла пулса тарать: пӗрпӗр ӗҫшӗн пурӗш те ответла, ҫӑннипе илсен никам та ответ тытмасть. Ыйтусем патне пӗтӗмешпе пӗрле илсе пырсан, тӗп ыйтусене куҫран вӗҫертесси те пулма пултарать. Ӗҫе „воопҫе“ туса пынӑ ҫерте татӑклӑн йертсе пырасси ҫинҫен нимӗнле халап-сӑмах та пулма пултараймасть. Куславкка, Шӑмӑрша т. ыт. хӑшпӗр районсенҫе лап та шайах ҫакӑн пек пулса тӑнӑ. Вӗсем пур колхоссене те „воопҫе“ илсе пӑхнӑ. Кашни колхос мӗнле ӗҫленипе, мӗнле сывланипе сахал интересленнӗ. Кашни колхоса уйрӑмӑн илсе йертсе пыни пулман. Ҫавӑнпа ӗнтӗ Куславккапа Шӑмӑршӑ районӗсем хуҫалахпа политтӗкла кампанисене иртерес тӗлешпе кайра пыраҫҫӗ, ҫавӑнпа ӗнтӗ Оҫӗрӑвсемпе Моросавсем ҫылай вӑхӑт хушши пӗр наккасанисӗр ашкӑнса пурӑнма пултарнӑ.

Пирӗн ӗҫре тӗслӗх, йаҫӗ пулгар, тесе ӗҫлени те пысак вырӑн йышӑнса тарать. Нумайӗшӗсем хушна ӗҫшен ответлӑха туймаҫҫӗ, ӗҫе ӑшран интереслесе тумаҫҫӗ, ӗҫен тесӗ, йаҫе пултӑр тесе ӗҫлеҫҫӗ. Ҫийелтен пахсан ӗҫлет темелле. Анҫах унӑн ӗҫне шаларах кӗрсе пахсан, есир ҫи кирлине, сотершанине тупаймастӑр. Сӑмахран, суха-ака тӑвассине илсе пӑхӑр. Ку ӗҫе икӗ тӗрлӗ пурнӑҫла-

мă пулаť. Йенђен ăшран интересленсе ĕçлет, сухаакана тирпейлĕ тăваť, ку çĕр çинђе тырпул тухăçлăхĕ пысăкрах пулаť. Çав вăхăтрах, çĕре çавăрса пăрахма пулаť, анђах унăн шăйăрăлђăксем йулаççĕ, ăшăх сухаланаť. Ку çĕр çинђе тыră та нађар пулаť. Прорыва пĕтерес тĕлĕшпе темĕн ђухлĕ канашлу пухма, темĕн ђухлĕ прикатăсем тата уполномођђăннăйсем йама пулаť, анђах çак ĕçсене йађĕ пултăр кăна тесе тусан, паллах, прорыва пĕтерме пулмасť. Куславккапа Шăмăршă урокĕсем ку тĕлĕшпе питех те вĕрентўллĕ уроксем пулса тăраççĕ. Сăмахран, Шăмăршă районĕнђе Ђепкас-Никољскăри ĕçсем пирки кашни уйăхра пĕр-икĕ ĕç пуçарса пыпă, анђах колхоса куппа пĕрре те çăмăл пулман. Мĕншĕн тесен ĕçе тĕсĕ, йађĕ пултăр, тесе кăнатупă, ĕçĕн шал йенне кĕрсе пăхма интересленмен, пĕр пуçарнă ĕçе вĕçне çитермен. Пăрађкав районĕнђи тройккăсемпе те истори çавăн пекех пулсă пынă.

Пирĕн акă мĕнле ĕçлемелле. Пĕрпĕр ыйтăва татса памалла пулсан, опрăснă каласан вăл ыйтăвă „вăкăра мăйракаран йарса илнĕ“ пек йарса тытмалла. Пирĕн халĕ ђас-ђасах ыйтăва „мăйракаран“ тытас вырăнне „хўререн“ çăлса илеççĕ, йĕри тавра çўреççĕ, вырăнта тапăлтатса тăраççĕ, йулашкинђен, ĕç сывлăшра çакăнса йулаť.

Пирĕн хамăрăн пракťĕккăран йађĕ, тĕсĕ пултăр тесе ĕçленине, пўрократла ĕçленине тимĕр шăпăрпах тасатмалла.

Хаљхи тапхăр йертсе пырас ĕçре тăракан йулташсем умне шутсăр пысăк трепăвăнисем кăларса тăратаť.

Пире партти кăтартса пынисене пурнăçлама пĕлекен, парттин çулйĕрĕшĕн пољшевикла паттăрлăхпа кĕрешме пултаракан катăрсем кирлĕ.

Пире йăвăрлăхсене çĕнтерме, массăн происвотствăллă тата политтĕкла хастарлăхне умра тăракан сатађсене пурнăçлама мопилисатсилеме пĕлекен катăрсем кирлĕ.

Пире массăна ăнлантарса пама, хăй хыççăн массăна илсе пыма пĕлекен катăрсем кирлĕ.

Пире комунисăм çулне, клас кĕрешĕвĕн фронтне пољшевикла прошектăрпа (ленинисăм вĕренӳпе) çутатса пыма пĕлекен катăрсем кирлĕ.

Пољшевикла прошектăрпа клас кĕрешĕвĕн фронтне çутатса хамăрăн вăйсăр йенсене вăхăтра палăртмалла, клас тăшманĕсене тата вĕсен акĕнҫĕсене—оппортунисcене вăхăтра тăрă шыв çине кăлармалла, вĕсене хирĕç ĕçхалăх массин хайарлăхне çĕклемелле.

Сирĕн Опкомран пример илмелле. Партти Опкомĕ уйрăм колхоссенҫи киревсĕр ĕçсене, вырăнсенҫи йертсе пырас çĕрти çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пољшевикла тĕпҫесе вĕренсе, вĕсем çинҫен орканисатси умне ыйтăва сарлакан лартрĕ. Çакă ĕнтĕ вăл,—пољшевикла прошектăрпа çутатма пĕлни пулаť.

## Колхос активĕпе ĕçлемелле

Куславкка, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсен пысăк йăнăшĕ—çĕнĕ условисенҫе колхос активĕ мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илменни, кулаксем тата ытти клас тăшманĕсем хирĕçĕшнине хирĕç колхоçнĕксен малта пыракан пайне—колхос активне тăратма пĕлменни.

Катăрсене вĕрентсе çитĕнтересси промышлĕннăçра ĕçе татса паракан ыйту пулса тăраť пулсан, йалхуçалăхĕнҫе вăл пушшех те çивĕҫ ыйту пулса тăраť. Колхосă йертсе пырас ĕçе малта пыракан колхоçнĕксене, колхоçнĕтсăсене — утарнĕксене хастарлăн хутшăнтармасăр, тĕрлĕрен хуçалăхла-политтĕкла каппанисене ирттернĕ ҫух çав актив çине тайăнмасăр партти пирĕн умма лартнă тĕп сатаҫа—колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенҫен тĕреклетессине—пурнăçлама пулмасť. Унсăрăн ĕç тухăçлăхне ӳстерме те, опҫăллă çĕнĕ тистиплинă тума тапулмаст. Унсă-

рăн акротехнĕккăна вĕренсе ăнланса илме те, сотсиалисăмла уйхирсен тухăçлăхне ӳстерме те, колхос происвогствин ĕçĕнђе Сталин йулташăн 6 исторйллĕ условисене пурнăçлама та пулмасť.

Сталин йулташ парттин XVI-мĕш сйесĕнђе çапла калана:

„Колхос йухăмĕнђи питрех те паха тивлет вăл—çак йухăм хресђенсем хушшинђенех колхос ĕçĕшĕн тăракан оркарисатгăрсемпе акитаттăрсене пиншерĕн, вуншар пинĕн кăларса тăратни пулаť. Халĕ ĕнтĕ ушкăнлăх йалавне малалла йатса пыракансем хамăрăн квалификкатсиллĕ пољшевиксем анђах мар, колхос ĕçне тăвакан вуншар пинлĕ хресђенсем колхос акитаттăрсем пулаççĕ. Колхос йухăмĕнђе хресђен акитаттăрсем пит те лайăх акитаттăрсем пулаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем, колхоса майлă пулса, ытти хресђенсене те ăнланмалла йапаласем кăтартма пултараççĕ, вĕсем çинђен епир, квалификкатсиллĕ пољшевиксем, шухăшлама та пултараймастпăр".

Ăçтан тухнă вĕсем, çав вуншар пинĕн шутланакан колхос строиттĕлствин орканисаттăрĕсем, акитаттăрĕсем? Вĕсем патраксенђен, ђухăнсенђен, вăтамсенђен тухнă. Вĕсем сотсиалисăмшăн кĕрешӳре, кулаксемпе хайаррăн кĕрешнĕ вут хĕмре, тырăшăн, колхоссене тĕреклетессишĕн, талкăшпе колхоса кусна никĕс çинђе кулаксене класĕпех пĕтерессишĕн паттăрăн кĕрешнинђе шăтса çитĕннĕ.

Пирĕн ĕç ăнăçлăн пулса пырасси ђи малтан çак актива орканисатсилеме, ăна хамăра кирлĕ вырăнсене вырнаçтарма пĕлнинђен килет. Сăмахран, вăрçăри фронта илĕр-ха. Çар пайĕсен паттăрлă пахалăхĕсене, вĕсем мĕнле хĕçпăшалланнине пĕлни, çар пайĕсен вайсăр тата тĕреклĕ вырăнĕсене, вĕсемпе кирлĕ пек усă курма пĕлни, çар пайĕсемпе маневăрлама пĕлни пĕр йăнăшсăр тенĕ пек çĕнтерӳве татса параť, темелле. Сотсиалисăм строиттĕлствин фронтĕнђе те çавăн пекех. Актива пĕлмелле,

ăна вĕрентмелле, ӳссе çитĕнме пулăшмалла. Пирĕн ĕçре çакă çитмест-ха.

Колхос прикатирĕ тĕп вырăнта пулмалла. Прикатир—колхос проиcвотствин оркаnисаттăрĕ. Партти йађейккисен колхоса оркаnисатсиллĕ ĕçсемпе хуçалăх йенђен тĕреклетес ĕçре прикатăна çирĕплетессине, прикатирсене суйласа илсе лартассине тĕп вырăна хумалла. Прикатирсене тек улăштарса пынипе хытă кĕрешмелле.

ПСК(п) П Тĕпкомĕ 1932 ç. февралĕн 4-ђе йышăннă постановленире çапла калаҭ:

„Прикатирсене суйласа илсе лартасси, вĕсене тек-тек улăштарса пырассине пĕтересси, вĕсен хăйсен хуçалăхла тата политтĕкла квалификкатсине ӳстерме ђăн-ђăн пулăшасси партти оркаnисатсисен паллăран та паллă сатађĕ пулмалла“.

Прикатирсемпе ĕçлемелле, тетпĕр. Мĕнле ĕçлемелле?

Прикатирсене колхос происвотствин оркаnисатсилле-хуçалăхлă ыйтусене сӳтсе йавнă çĕре пур ђух та хастаррăн хутшăнтармалла. Татăклăн илсен: вĕсене правлени ларăвĕсене ђĕнмелле, происвотствăллă плансене тунă ĕçе хутшăнтармалла, уйрăм ыйтусем тăрăх пухса калаçмалла, колхос правленисенђе, йалсовет преçитиумĕнђе, йађейккă пӳровĕсенђе прикатирсен токлађĕсене лартмалла.

Прикатирсене партти шкулĕсене, крушокĕсене йавăçтармалла. Колхос çумĕнђе прикатирсен каçпала ĕçлекен курсĕсене уçса, вĕсенђе политтĕкла ыйтусене кăна мар, вĕсемсĕр пуçне тата опщђеопрасоваттĕлнăй претметсене (акротехнĕккă, маттематтĕккă, йестествоветени т. ыт. те) вĕренмелле. Çак ĕçре пире акрономсем, уђитлĕсем пулăшмалла.

Прикатирсен хуçалăхла, технĕкла тата политтĕкла пĕлӳне ӳстерес тесе шутлатпăр пулсан, пирĕн вĕсене массăллă литтераттурă туйантармалла. Вĕсен аллинђе йалхуçалăх ыйтăвĕсем, машшинла технĕккă çинђен çырнă, парттин халђи политтĕкла

ăнлантарса паракан, колхоссене тата колхоçнĕксене çăмăллăхсем панине каласа паракан прошшӳрăсем пулмалла.

Малалла, колхос активĕ тесе камсене шутламалла? Ку ыйту тăрăх ăнланса илменнисем, ыйтăва пăтратнисем вырăнсенче темĕн чухлех. Чăн та, камсене шутлатпăр ха? Паллах, ку хисепе колхос претçетаттĕлĕсем те, прикатирсем те кĕреççĕ. Тата камсем? Колхос активĕ тесе колхоçнĕксене-утарнĕксене, сотсиалисăмла ăмăртура паттăрăн хутшăнакансене, вăрлăхшăн, тырпул тухăçлăхне, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, çĕнĕ тистиплинăшĕн, йăвăрлăхсене çĕнтерессишĕн, кулакла туртăмсемпе вăйа хурса кĕрешекенĕсене шутламалла.

Куславкка районĕнчи Оçĕрăвсем те, Канаш районĕнчи Никкифăрăвсем те, Шăмăршă районĕнчи Моросăвсем те йертсе пырас вырăнсенче пулнă. Анчах вĕсем колхос активисĕсем мар, вĕсем клас тăшманĕн активисĕсем. Вĕсемпе епĕр польшевикла хайарлăхпа кĕрешетпĕр, ун пеккисене, сĕрĕнсе кĕнĕ йут етемсене, пăсăлса кайнă етемсене тупса палăртса актив ретĕнчен пĕр вăхăта чăсмасăр кăларса сирпĕтмелле.

Колхос строиттĕлствишĕн ăшран парăнса ĕçлекен колхоçнĕксем пур-и? Пур, вĕсем йышлă, вĕсем халĕ пиншерĕн, вуншар пинĕн шутланаççĕ. Пирĕн çак вăйсене оркависатсилемелле. Çак ĕçе йатарлансах тытăннă çĕрте тĕлĕнмелле пысăк ситĕнӳсем туса хума пултарни пирки, никам та иккĕленсе тăма пултараймасть.

## Акиттатсипе массăллă ĕçе вăйлатмалла

Колхоçнĕксене сотсиалисăмла вĕрентес тата колхос активне вĕрентсе çитĕнтерес сатачсем парттин массăлла, политтĕкла ĕçне урăхлатса çĕнетме хушаççĕ.

Партти йачейккисем хуçалăхăн чылай ыйтăвĕсем тăрăх йапăх ĕçлемеççĕ. Çав хушăрах полит-

тĕкла ăнлантарса парас ĕçе орканисатсилесси йулса пырат. Парттин лосăнкĕсене ăнлантарса парасси, массăна çав лосăнксене пурнăçлама мопилисатсилесси парттилле-массăллă ĕçре тĕп вырăнта пулмалла. Колхоçнĕксене хăйсем ăнланса илеймен ыйтусене ђăтăмлăн ăнлантарса пама вĕренесси, вăхăта та, вăйа та шеллемесĕр ăнлантарса парса ĕнентерме вĕренесси вăл, пысăк ĕç. Епĕр опђăн кивĕ çыхăнусене, еккономĕкри кивĕ йĕркесене, тымарланса ларнă тĕрлĕрен тĕшмĕшлĕхсене, пăталанса ларнă кивĕ хăнăхусене çĕмĕрсе çĕнĕ çыхăнусем, опђăллă çĕнĕ тистиплинă тăватпăр, ĕçе çĕнĕлле орканисатсилетпĕр. Ку ĕçе пĕр самантра туса хума пулмаст. Ку ĕçе текрет кăларса текретпа туса çитерме пулмаст. Колхоçнĕксене сотсиалисăмла вĕрентессине куллен, ђăтăмлăн туса пымалла.

Колхоçнĕк тĕрлĕрен ыйтусемпе интересленет. Ăна происвотствă ыйтăвĕсем: тупăша валеçесси, происвотствăллă прикатăсен ĕçкунĕсен хакне хăпартса, йе ђакарса пани, колхосла суту-илӳ т. ыт. нумай ыйтусем интереслентереççĕ. Колхоçнĕке тĕнђе ларутăрувĕн ыйтăвĕсем, тĕнђери пролеттариатăн революутсилле кĕрешӳн ыйтăвĕсем хытă интереслентереççĕ. Колхоçнĕк çав ыйтусене ђас-ђасах вĕçне çитиђђен, йе вуçах ăнланса илеймест. Пирĕн, польшевиксен куллен, ђăтăмлăн ăнлантарса памалла. Пирĕн парттин лосăнкĕсем тĕрĕссине ăнлантарса парса колхоçнĕксене ĕнентермелле. Колхоçнĕксен пĕлӳне парттин лосăнкĕсене ăнланса илме пултарни таран хăпартмалла.

Тата уйрăм хуçалăхла ĕçхресђенĕсем хушшинђе ĕçлессине илер. Тӳрех каламалла: уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенĕсем хушшинђе вырăнсенђе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ, йе ăна манса хăвараççĕ. Уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенĕсем хушшинђе ĕçлессине пĕр минутлăха та манма йурамаст. Вĕсене интереслентерекен ыйтусем шутсăрах нумай. Вĕсен ăшĕнђе халĕ икĕ туртăм выльат. Колхос йенелле

пăкаҫ, колхоссем тĕрекленсе пыни, колхоссен, тата колхоçнĕксен тупăшĕ ӳссе пыни вĕсене колхосалла туртаҫ. Тепĕр йенҫен пĕр ĕмĕртен тепĕр ĕмĕре туса пынă хăйĕн ҫухăн хуçалăхне çавăрăнса пăхаҫ те, çав ĕмĕрпе хăнăхса пынă йăласенҫен нийепле те хăтăлаймасҫ. Капиталисăм стройĕ ĕмĕрĕпе вĕрентсе хăнăхтарнă кивĕ йĕркесем, харпăрлă туртăмсем темĕн йăвăрĕш урараи çакăнаççĕ, кайалла туртаççĕ. Халĕ вăл „колхоса кĕрес-ши, кĕрес мар-ши“ тесе турткаланса тăраҫ. Пирĕн мĕн пур майсемпе колхос йенелле туртăннине вăйлатмалла, йетинолиҫнĕк колхоса кĕрессине хăвăртлатмалла Çакна пурнăçлама пирĕн халĕ пур майсем те пур. Ҫи малтан вăл, колхоссем тĕрекленсе пыни, вĕсен тата колхоçнĕксен тупăшĕ ӳссе пыни, колхос вăл, вакă, сапаланҫăк хуçалăхран тупăшлăраххине йетинолиҫнĕксене ăнлантарса парса ĕнентерме колхос строиттĕлствин практĕкĕнҫен пин тĕслĕх илсе кăтартма пулаҫ. Колхос строиттĕлстви халĕ сăнаса вĕренмен, тĕрĕслесе пăхман çулйĕр мар. Колхос йухăмĕ массăллăн пуçланса кайни виçĕ çул çитет. Виçĕ çул хушшинҫе пирĕн колхоссем пысăк оппăт туйанҫĕç, колхоссенҫе хăйсенҫех колхос строиттĕлствин орканисаттăрĕсем, акиҭаттăрĕсем пиншерĕн, вуншар пинĕн шутланаççĕ. Йетинолиҫнĕксене колхос строаттĕлстви пĕртен пĕр тĕрĕс çул пулнине ăнлантарса ĕнентерме мĕн пур оппăта, колхоçнĕксенҫен шăтса çитĕннĕ мĕн пур акитаттăрсене мопилисатсилемелле. Çак ĕçе мĕн ҫухлĕ аванрах туса пыратпăр, уйрăм хуçалăхлă ĕçхресҫенĕсем колхоса кĕрессине çавăн ҫухлĕ хăвăртлататпăр. Уйрăм хуçалăхсем хушшинҫе ҫăтăмлăн ĕçлессине хак паманни вăл,—ĕçре сылтăм оппортунисăм пулса тăраҫ. Ăна пирĕн хайарҫăн çĕмĕрсе пымалла.

Анҫах çак хаҫ çеç асăннă сатаҫсене комуниссен, тата комсомолĕссен итейлăхпа политтĕк виçине ӳстерсе пымасăр татса пама пулмасҫ.

„Комуниссемпе комсомолĕссен, пуринҫен

малтан партактивăн теорил лĕ итейлĕхне хăпартас сатаҫ хаҫхи вăхăтра пит те ҫивĕҫҫĕн тăрать. Пĕр ҫав итейă тĕлĕшĕнҫен вăйсăр хĕҫпашалланнă пиркийех епĕр ҫăс-ҫасах, сăмахран—Украйнăра, ҫакнашкал комуниссене тĕл пулатпăр. Ку комуниссем пĕр-пĕр йăвăрлăха пырса тĕкĕнсенех пуҫĕсене ҫухатаҫҫĕ, мĕншĕн тесен вĕҫсене вĕҫсемпе сыхгалартма вĕсен итейлăх пакашĕ ҫитмест. Вĕсем орканисатси орутийĕнҫен, паттăрлă кĕрешме ҫĕнекен кĕрешӳҫĕсенҫен, хăйсем хыҫҫăн массăсене йертсе пыраканскерсем, — ирĕлсе кĕсел пулса тăраҫҫĕ, ĕҫе ҫăрмантараканĕсем пулаҫҫĕ" (Какановиҫ).

Ҫакăнтан ĕнтĕ маркҫисла-ленинла вĕренӳве вирлĕн орканисатсилес, унпала пур комуниссене те, комсомолĕссене те, тата колхос активне ҫавăрса илес сатаҫ тухса тăрать. Парттиллĕ вĕренӳ урлă комуниссене, комсомолĕссене, тата колхоҫнĕксен массине партти кăтартувĕсене пурнăҫлама кĕрешӳве мопилисатсилемелле. Парттиллĕ вĕренӳве оппортунисла хак паманнине вирлĕн ҫапса ҫĕмĕрмелле.

## Патшалăх сатанисене пĕр пăркаланса тăмасăр тултармалла

Епир, пĕрремĕш петтилеткăна пурнăҫласа ҫитерес, иккĕмĕш петтилеткăна кĕрес умĕнҫе тăратпăр. Епир пит те паллă, пит те ответлă вăхăтра тăратпăр. Пирĕн иккĕмĕш петтилеткăна кĕрес умĕнхи йулашки вăхăтăн кашни кунĕсемпе мĕн пур майсемпе усă курмалла. Пирĕн иккĕмĕш петтилеткăна пĕрремĕш петтилеткăн планне пур уҫаскăсенҫе те пурнăҫланипе кĕмелле. Пĕрремĕш петтилеткăн планне тултармасан хамăра сирсе пăрахми намăспа витсе хуратпăр. Мĕн пур вăйа пухса плана тултармаллах. Уйрăмăн илсен, хамăрăн вăйсене ҫи малтан мĕнле ĕҫсем тавра пухмалла?

Ун пек ӗҫсем хăлĕ—укçа-тенкĕ пухас плана тултарасси, çĕрулми тата пахча-çимĕç хатĕрлевсен планĕсене тултарасси, техникăлла культурсене хатĕрлесси. Тӳрех каламалла: ку ӗçсене ӗçсем йапăх пыраççĕ.

Тырпул хатĕрлевĕ тăрăх крайри автономисен ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна тухрăмăр пулсан, техникла культурăсем, паранкă тата пахча-çимĕçсем хатĕрлес тĕлĕшпе те малти вырăна тухассишĕн кĕрешни чысла сатăч пулмаст-и? Чысла сатăч пулать, ку фронтра та малти вырăна йышăнмалла.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Чăваш респуплĕкĕ темиçе çул умлă хыçлах малти ретре пычĕ пулсан, петтилеткăн йулашки çулĕн планне тултарас çĕрте Совет сойусĕпе малти рете тухассишĕн кĕрешни чысла сатăч пулмаст-и? Пит те чысла сатăч. Совет сойусĕпе малти рете тухассишĕн кĕрешмелле те.

Тырпул хатĕрлес тĕлĕшпе Крайри оркăнсем панă плана пайан кува ытлашшипех тултарнă. Анчах хамăр самоопесаттĕлствăпа илнĕ плана пайан куна та тултарса çитерейменха. Плана тултарман, хăшпĕр районсем лăпланса ларнă. Лăпланса ларма пире кам мĕнле права панă? Тырпул хатĕрлев планне тултарманни пĕр колхос та, пĕр хуçалăх та йулмалла мар. Çак сатăча пурнăçласа çитерсен кăна тырпул хатĕрлев планне тултарнă, тесе шутламалла. Лăпланса ларма пăхнипе хытă кĕрешмелле.

## Тупăша валеçесси тата çуракине хатĕрленесси

Колхоссенче тупăша валеçесси ответлăран та ответлă сатăч пулать. Хапрăк-савăтра рапочи кашни икĕ ернерех ветăмăç çине алă пусса ĕçукçи илет. Колхосра ун пек мар. Колхосра çулталăк хушши ĕçлесе, çулталăк хушшинче ĕçлесе илнĕ тупăша пĕрре валеçеççĕ. Çулталăкра кашни мĕн чухлĕ ĕçлениие шута тĕрĕс илсе пымалла. Хăшпĕр кол-

хосра правленинҙе ларакансем хăйсен хăйматлăхĕсене, пуçанисене, хунҙăкĕшĕсене, пйахамĕсене, куммисене ĕçкунĕсем шутне ĕçленинҙен ытлашши çырса лартса, çав хушăрах ҙăн-ҙăн утарнĕксен ĕçкунĕсен шутне ҙакарса çырнисем те пулма пултараççĕ. Ку мĕн патне илсе пырасси пурившĕн те паллă пулмалла. Çапла туни колхоçнĕксене хирĕçтерсе йама кăна пулăшаť.

Кахалсем, рваҙсем ĕçленĕ ҙух ĕçрен пăрăнса çӳресе, тупăша валеçнĕ ҙух мĕнле те пулин пысăкрах татăк илесшĕн хыпса çӳреççĕ. Тепĕр йенҙен, тупăша валеçесси тавра клас кĕрешĕвĕ çивĕҙҙĕн пырасси куçа кĕретĕнех курăнаť. Кулакла етемсем ҙи малтан тупăша пурне те пĕр тан валеçсе парас çул çине тăратма, колхоçнĕксен кайа йулнă сийĕсен харпăрлă туртăмне ҙĕртсе йама тăрăшаççĕ. Тупăша валеçес ĕçе пит те пĕлсе тумалла.

Партти Омкомĕ хăйĕн нойапĕрĕн 4-ҙе йышăннă постановленинҙе колхоссенҙе тупăшсене валеçесси çинҙен тĕплĕн кăтартса паҙĕ. Çак постановленийе кашни колхоçнĕке ăнлантарса памалла, постановленире кăтартса панисене пĕр сăмахсăр пурнăçламалла. Кĕскен тĕп ыйтусем çинҙе ҙарăнса тăма тивет.

Тупăшсене „кам ытларах та лайăхрах ĕçлет— вăл нумайрах илет, кам ĕçлемест — вăл нимĕн те илмест", тенĕ йĕркепе валеçмелле. Урăх нимĕнле йĕрке те пулма пултараймаť.

Происвотствăллă прикатăсен ĕç пахалăхне пăхса ĕç кунĕсен хакне, йе ĕçкунĕсен шутне 10—20 проҙҙăн хушши ӳстерсе, йе ҙакарса памалла. Çакна нумай çĕрте пурнăçа кӳртмеççĕ.

Епир происвотствăлă прикатăсене çирĕплетес, ĕç пахалăхне ӳстерес, колхоçнĕксен тăрăшса ĕçлес интересĕсене хăпартас тетпĕр пулсан, çак хаҙ çеç асăннине пĕр пăркаламасăр пурнăçламалла.

Колхоçнĕксем тупăша пĕлтĕрхинҙен кайа мар илмелле. Партти Опкомĕ колхосăн пĕтĕм тупăшĕнҙен колхоçнĕксене 50—60 проҙҙăн валеçсе пама

кăтартса пађĕ. Хăшпĕр колхосра колхоçнĕксене валеçсе паракан тупăш çак виçерен кайра пулсан, райкомсен, райĕçтăвкомсен, тата райколхоссойуссен çав колхоссене хăйсен претставиттĕлĕсене йарса тĕрĕслемелле. Районран йанă претставиттĕлсен колхоçнĕксемпе пĕрле мĕн пирки ĕççунĕсем хакĕ ђакнине сăнаса вĕренсе, колхоçнĕксене тупăша иртнĕ çулхинђен кайа мар илмелле туса памалла.

Партти райкомĕсен, тата райколхоссойуссен уйрăм колхоçвĕксем мĕн пирки ĕçкунĕсем сахал тунине тĕплĕн вĕренсе, хăйсене çителĕклĕ таран ĕçкунĕсем ĕçлесе илме, вĕсене çулталăк пĕтиђђен ытларах ĕç памалла тумалла.

Тупăша валеçесси хăй тĕллĕн пулса пыма пултараймасть. Вырăнсенђе хăй тĕллĕн пуласса оппортунисла шаннисем пур вара. Ĕç хăй тĕллĕн пуласса оппортунисла шаннине, кулакла пурне пĕр тан валеçсе пама пăхнине хайаррăн çĕмĕрсе тăкмалла.

Çак ĕçе пит те тĕплĕн, куллен йертсе пымалла. Çак ĕçе тĕрĕс иртернинђен ĕнтĕ колхоссене орканисатсиллĕ ĕçсемпе хуçалăх йенђен тĕреклетесси, колхос йухăмĕ вăйланасси, малалли ĕçсем ăнăçлăн пулса пырасси килет. Çак ĕçе тĕрĕс туса иртернинђен ĕнтĕ çуракине вирлĕн хатĕрленсе иртересси, çитес çул татах та пысăк çĕнтерӳсем тăвасси килет.

Иккĕмĕш петтилеткăн пĕрремĕш çураки умĕнђе шутсăр пысăк сатађсем тăраççĕ. Тĕп сатађ — сотсиалисăмлă йалхуçалăх производствине, тырпул тухăçлăхне хăпартасси, уйар çанталăкпа кĕрешме пођшевикла тытăнасси. Çакăнтан акротехнĕккăшăн кĕрешесси çивĕђђĕн тухса тăрать. Акротехнĕккăшăн кĕрешессине ансăррăн илсе ăнланмалла мар. Акротехнĕккăшăн кĕрешесси вăл — сотсиалисăмла наступленийе çĕнĕ майсемпе туса пыни, куђттурла револђутсин çĕнĕ тапхăрне кĕни пулать. Çакăнтан вара йала сотсиалисăмла урăхлатса çĕ-

нетес ҫӗрте ҫӗнӗ улшӑну тума кирли, тата вӑл улшӑну мӗнре пулмалли тухса тӑрать.

Йалхуҫалӑхне хӑпартассин пӗрремӗш тапхӑрне — акмалли ҫӗр лаптӑкне аслӑлатассине — татса панӑ. Ҫак сатаӡа епӗр талкӑшпех колхоса куҫса пыни урлӑ кӑна пурнӑҫлама пултарнӑ. Халӗ пирӗн умра совхоссемпе колхоссен происвотствине пахалӑх тӗлӗшӗнӡен хӑпартас, тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн кӗрешес сатаӡсем тӑраҫҫӗ. Совхоссемпе колхоссем сарӑлса тӗрекленсе пыни, йалхуҫалӑхне ҫӗнӗ технӗккӑпа хӗҫпӑшаллантарни ҫак сатаӡсене ӑнӑҫлӑн татса пама ҫул уҫса паӡӗҫ.

Кам акротехнӗккӑна пурнӑҫлассишӗн кӗрешессине колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх йенӡен тӗреклетес, колхоҫнӗксене сотсиалисӑмла вӗрентес сатаӡсенӡен уйрӑмӑн илсе пӑхать, вӑл парттин ҫулйӗрне нимӗн те ӑнланман. Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес сатаӡа колхоссене тӗреклетес, колхоҫнӗксене опӡӑллӑ пурлӑх ҫине хӑйӗн тӑван пурлӑхӗ ҫине пӑхнӑ пек пӑхма вӗрентес, ҫӗнӗ тистсиплинӑ тӑвас, кулаксемпе тата колхоссенӡи харпӑрлӑ гуртӑмсемпе хайаррӑн кӗрешес сатаӡсемпе таӡӡӑн ҫыхӑнтарсан кӑна ҫӗрӗҫӗнӡе сотсиалисӑмла кулӡтурӑна тӑвӑллӑн ҫӗклентерме пулать.

Ҫакна тӗп вырӑна хурса суракине вирлӗн хатӗрленмелле. Ҫывӑхри вӑхӑтрах мӗн тумалла? Пӗрремӗш, вӑрлӑх фонӡӗсене туса, вӗсене халех тасатса хумалла. Ҫавӑн пекех страхфонтсене те пӗр вӑхӑта тӑсмасӑр хывса ҫитермелле. Иккӗмӗш, йалхуҫалӑх машшинсенӡен хӑшне йусамаллине палӑртса йусав ӗҫне халех тытӑнмалла. Унта-кунта, йур айӗнӡе выртса ҫӳрекен машшинсем пулмалла мар. Машшинсем пурӗш те сарайсенӡе, типӗ ҫӗрте, йур-ҫӑмӑр анман ҫӗрте йӑлтӑртатса сутапса тӑмалла. Уйрӑмӑнах трактӑрсене йусассине ҫирӗп орканисатсилемелле. Виҫҫӗмӗш, уйхирсенӡе йур тытса ӡарассине халех тытӑнса, ку ӗҫе хӗл каҫах тумалла. Йулашкинӡен, тӗрлӗрен курс-

сем урлă катăрсем хатĕрлессине сарлакан орканисатсилемелле. Унсăр пуçне колхоссенђе акротехнĕккăлла крушоксем массăллăн уçмалла. Акротехнĕккăна вĕренсе ăнланса илессишĕн кĕрешме массăллă поххота тухмалла.

## Промфинплана тултармасăр тăма пирĕн нимĕнле сăлтав та çук

Епĕр ђылай уђаскăсенђе пысăк çитĕнўсем турăмăр, ђылай уђаскăсенђе плана тултарса, йе ытлашшипех тултарса пыратпăр. Анђах çав хушăрах пирĕн хăшпĕр уђаскăсенђе, уйрăмăнах промфинплана тултарас çĕрте, пысăк çитменлĕхсем пур. Ђăн та пирĕн промышлĕннăçра та пысăк çитĕнўсем пур. Промышлĕннăç туса кăларнă протуксин иртнĕ çулхипе танлаштарсан кăçал нумай ўснĕ. Хăшпĕр претприйаттисем („Йетинствă“ хаприкĕ, сăрая савăђĕ тата ытти) хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Анђах пĕтĕмĕшпе илсен промфинплана тултарасси пысăк прорывра. План шут йенђен тулса пыманнисĕр пуçне тата протуксин пахалăхне ўстерес, протуксине хăйне ларакан хакне йўнетес çĕрте ĕçсем ђăтма çук йапăх пыраççĕ.

Мĕншĕн промфинплана тултарса пымаççĕ? Мĕн çитмест пирĕн? Ђĕрĕ таварсем хамăрăнах ытлашшипех. Хапрăк-савăтсем ĕçлеççĕ. Раповђи снапшенине аванлатма пур майсем те пур. Ђăн та мĕн çитмест?

Ĕçлеме пĕлни, хуçалăх оркăнĕсем йенђен йертсе пыма пĕлни çитмест. Партти кăтартса панисене, Сталин йулташăн 6 условисене пурнăçлассишĕн çине тăрсах кĕрешни çитмест. Умри йăвăрлăхсене пољшевикла паттăрлăхпа çĕнтерме пĕлни çитмест. Ђылай претприйаттисенђе парттиллĕ-массăллă ĕç вуçех çителĕклĕ мар.

Апла пулсан, промфинплана тултарма ђаракан сăлтавсем çук. Партти Опкомĕ йенђен кă-

тартса панисем çителĕклĕ. Партти Опкомĕ пӳро ҫленĕсене вырăнсене йарса претприйаттисене пысăк пулăшу парса пырат̆. Тирексисен, партти орқанисатсин тата фапсавкомсен рапоҫҫисен производствăллă тата политтĕкла хастарлăхне çирĕп мопилисатсилесе, умри йăвăрлăхсене сирсе пырса, партти кăтартса панисене çине тăрсах пурнăçламалла. Вăхăт мĕн пурĕ те уйăх çурă кăна йулҫĕ. Çак вăхăт промфинпланшăн кĕрешес çĕртре ҫи вĕри вăхăт пулса тăрат̆. Епир ытти уҫаскăсенҫе плансене тултаратпăр, ăна епир пĕр иккĕленсе тăмасăр калама пултаратпăр. Ҫерет промышлĕннăç-ра, промышлĕннăç хăйĕн планне паттăрăн тултарассинҫе.

Тепĕр пысăк ыйту—вăрман хатĕрлесси. Вăрман хатĕрлесси халăх хуçалăх планне тултарнă çĕрте мĕнле вырăн йышăнса тăни пуриншĕн те паллă. Епĕ ку ыйту çинҫе ҫарăнса тăмастăп. Епĕ мĕн пурĕ те çакна кăна каласшăн. Вăрман хатĕрлес плана тырпул хатĕрлев хăвăртлăхсемпе тултарассишĕн кĕрешмелле. Хăшсем вăрман хатĕрлесси хăй тĕллĕнех пулса пырат̆, тесе шутлаççĕ. Ку вăл киревсĕр, йăнăш шухăш. Вăрман хатĕрлесси кĕрешмесĕр, хăй тĕллĕн пулса пымаст̆. Вăрман хатĕрлессине орканисатсилемелле, ăна çирĕп йертсе пымалла.

Йулташсем! Тепĕр уйăх çурăран иккĕмĕш петтилеткăна пурнăçлама тытăнатпăр. Иккĕмĕш петтилеткăн планĕсем мĕн тери пысăк пулса тăнине есир аван пĕлетĕр. Анҫах урăхла пулма та пултараймаст̆. Епир историллĕ ĕçсем тăватпăр, мĕн пур вăйа пухмасăр, çине тăрсах кĕрешмесĕр вĕсене пурнăçлама пулмаст̆. Пире истори питех те кĕске срук панă. Çак кĕске срукра пирĕн технĕккăпа економĕк тĕлĕшĕнҫен малта пыракан кăпиталисла патшалăхсене хăвалаçа çитсе иртсе каймалла. Çак историре паллăран та паллă пысăк ĕçе кĕрешӳсĕр, пĕтĕм вăйа пухмасăр туса çитерме пулмаст. Пирĕн çул çинҫе малашне те йăвăрлăхсем пулаç-

çĕ. Анҫах епĕр пирĕн йăвăрлăхсем мĕнрен килни-не аван пĕлетпĕр. Пирĕн йăвăрлăхсем—малалла хăвăрт ӳссе пынин йăвăрлăхĕсем. Пирĕн йăвăр-лăхсем—клас кĕрешĕвĕнҫен, оппортунисла етемсем хирĕçĕшвинҫен тухса тăракан йăвăрлăхсем. Пирĕн йăвăрлăхсем кăпиталисăм йулашкисене сирсе пы-нинҫен, кивĕ йĕркесене пăсса çĕнĕ йĕркесем, çĕнĕ хутшăнусем туса пынинҫен тухса тăраççĕ.

Пире çав йăвăрлăхсене çĕнтерме пĕлекен, вĕ-сене çĕнтерме массăсене мопилисатсилеме пĕлекен катăрсем кирлĕ. Хамăрăн поçитсине кайалла пар-са пынипе мар, кайалла ҫакнипе мар, малалла наступлени туса пырса çеç, пролеттари тиктатту-рине тĕреклетсе пырса çеç, клас тăшманĕсемпе тата вĕсен акĕнҫĕсемпе тĕрлĕ тĕслĕ оппортунис-семпе, уйрăмăнах хаљхи тĕп хăрушлăхпа—сылтăм сулăнҫăкпа малалла та пољшевикла хайарлăхпа кĕрешсе, вĕсене нимĕн шеллемесĕр çĕмĕрсе пырса çеç йăвăрлăхсене çĕнтерме пултаратпăр. Пирĕн çак сатаҫсене пурнăçлама ĕçхалăх массин политтĕкла хастарлăхне мопилисатсилемелле, массă умĕнҫе тăрса ăна йертсе пымалла. Епир Ҫăваш респуплĕ-кĕнҫе пĕрремĕш петтилеткăна ҫыслăн, паттăрăн пурнăçлатпăр, анҫах çав хушăрах пирĕн çитмен-лăхсем те пур-ха. Çак çулăн планĕсене пур уҫас-кăсенҫе тултарса иккĕмĕш петтилеткăна пурнăçла-ма хатĕрленсе илмелле. Пирĕн умра пысăк, йăвăр, анҫах питех те ҫыслă сатаҫсем тăраççĕ. Çав са-таҫсене пурнăçлама пирĕн пур майсем те пур. Пи-рĕн партти оркакисатси халĕ парттин тĕп çулйĕрĕ, Сталин йул. çул пуç пулса тăнă Тĕпком тавра нихă-çанхи пек те мар çирĕп пĕрлешсе тăрать. Çакă вăл,—çĕнтерӳсен тĕп услови пулса тăрать.

Йулташсем! Çĕнĕ çĕнтерӳсем патне, малалла!

(Нумайҫҫен хытă алă çупаççĕ).

*1-мěш хушса хуни.*

## Мало-Пишшěври „Заря" колхосри ěçсем çинђен

**(ПСК(п)П Опком пӳровěн тата ОКК преçитиумěн пěрлешӳллě ларăвěнђе октăпěрăн 10-мěшěнђе йышăннă постановлени.)**

ПСК(п)П Опкомě, тата ОКК уйăрнă комиççин токлатне, Куславкка райкомěн çекреттарěн, Матвейěв йулташăн сотоклатне, тата Куславкка районěнђе ěçлекен йулташсем тухса каланисене итленě хыççăн ПСК(п)П ОК пӳровěпе ОКК преçитиумě ак çаксене палăртаççě:

1. Мало-Пишшěвă йалěнђе кулаксем Оçěрăв йертсе пынипе йалсовета, тата «Заря» колхос правленине кěрсе кайнă та, нумай вăхăт хушши Совет влаçěпе партти çине тивěççěр йат ӳкерекен тěрлěрен айăплă ěçсем туса тăнă, вăл ěçсем «Заря» колхоса органисатсипе хуçалăх тěлěшěнђен çирěплетес ěçе пăсса тăнă, хуçалăхпа политтěк кампанисене иртерес ěçе те ђăрмантарнă. Вăл ушкăн, хăшпěр комуниссемпе комсомолěссем, райком пӳровěн ђленě Фомин йулташ та,—вăл кулак, тийеђук ывăлне, Оçěрăва, партти кăнтитатне кěртнě,—тӳррěнех пулăшса тăнипе, колхоçнěксемпе уйрăм хуçалăхлă ěçхресђенсене хěненě, саккуна пăсса арěсленě, ухтарусем тунă, хăратнă, штравланă, пурлăхсене туртса илнě, патшалăхпа колхос пурлăхěсене çаратнă, суйа токкумěнтсем туса вěсемпе вçаткăшăн суту-илӳ тунă, алăстисен протуксипе çпеккулђатси тунă, ěçкěпе ашкăннă, ěçсен çапăçнă, хуликанла ěçсем тунă, кулаксене çирěп парусенђен хăтарнă, вěсене колхоса

кĕртнĕ, ђухăнсемпе, вăтамсемпе атминистратсиллĕ майсемпе хăтланнă (вĕсем çине çирĕп парусем хунă, колхосран кăларнă, т. ыт. те).

2. Мало-Пишшĕвă йалĕнђи колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă хресђенсем çав кулаксен ушкăнĕ саккуна хирĕçле хăтланни, тата мăшкăлани çинђен райколхоссойуса, вырăнти партти йађейккине (унăн çекреттарне Толстов йулташа), районти парттипе совет, тата çлетстви оркăнĕсене те темиçе хут та шалăпăсем панă, анђах районри аппаратри оппортунисла, тата пўрократла елементсем вăл шалăпăсем çине тивĕçлипе пăхман, Оçĕрăвăн совета хирĕçле ушкăнне тăрă шыва кăларман, çапла вĕсем вăл ушкăншăн вĕсен ĕçĕсене тата вăйлатма, шалăпă паракансене хĕсĕрлеме май кўрсе панă. Райколхоссойус колхоçнĕксен шалăпи çине çавăрăнса пăхмасăр айăплă ĕç тунă.

Райĕçтăвком Мало-Пишшĕвăри ĕçсем çинђен пĕлнĕ, анђах вăл йалсовет претçетаттĕлне йађĕшĕн кăна вырăнтан кăларнипех ђарăннă (çулталăкра 6 претçетаттĕле улăштарнă), Оçĕрăв ушкăнне тăрă шыва кăларса салатма мĕн кирлине туман, ăна пула йалсовеђĕ кулаксен аллине кĕрсе ўкнĕ, вĕсен ĕçне тунă. Райĕçтăвком претçетаттĕлĕ Шумилăв й-ш ПСК(п)П Опкомĕпе ОК уйăрнă парткомиççи пыриђђенех Оçĕрăв айăплă мар тесе шутланă, ăна хупса лартнă çĕртен кăларма хушнă.

3. ПСК(п)П райкомĕпе РКК-инђе те «Заря» колхоçнĕкĕсен сайавленийĕ пулнă, анђах кулаксен çав асăннă совета хирĕçле ушкăнне тăрă шыва кăларма нимĕн те туман, райкомăн 3 ђленĕ реккоментатси панипе кулак акĕнтне Оçĕрăва, вăл ђи лайăх активиссенђен пĕри тесе, партти ĕретне илнĕ.

Вăл ĕнтĕ районри партти йертсе пырăвĕ клас сисĕмлĕхне, пођшевикла сыхă тăрассине çухатнине, колхоçнĕксен, уйрăм хуçалăхла ĕçхресђенсен йышлă массисенђен уйăрăлса кайнине, сылтăм оппортунисла ĕçленине кăтартаť, ăна пула Куславкка районĕ хуçалăхпа политтĕклĕ пысăк кампанисен—тырпул хатĕрлессин, кĕрхи çĕртме тăвассин, укçа-тенкĕ пухас-

син планӗсене, тата Куславккари стройтеттаӡ савӑӡӗн промфинпланне тултарас ӗҫре прорыва кӗнӗ.

ПСК(п)П Опком пӳровӗпе ОКК преҫитиумӗ ҫапла йышӑнаҫҫӗ:

1. Куславкка районӗнӡе парттипе совет йертсе пырӑвне ҫӗнетес;

а) ПСК(п)П райком пӳровне салатса йарас;

у) райком ҫекреттарне, Матвейӗв йулташа, ӗҫрен кӑларас, ӑна хытӑ йатлас, 2 ҫул хушши парттире ответлӑ ӗҫре пулмалла мар тӑвас, ПСК(п)П Опкомӗн ӡеретлӗ пленӑмӗнӡе ӑна Опком пленӑмӗн ӡленӗнӡен кӑларасси ҫинӡен ыйту лартас;

ы) Орканисатсиллӗ пай пуҫлӑхне, Вахрамейӗв йулташа ӗҫрен кӑларас, происвотствӑра ӗҫлеме йарас;

ӑ) Фомин йулташа кулаксен ушкӑнӗн ӗҫӗсене пытарса пурӑннӑшӑн, Оҫӗрӑва парттине кӗртнӗшӗн парттирен кӑларас. Сутпа ҫлетстви оркӑнӗсене ӑна Оҫӗрӗвӑн совета хирӗҫле ушкӑнне пулӑшнӑшӑн ответа тӑратма хушас.

2. Райӗҫтӑвком претҫетаттӗлне, Шумилӑв йулташа, ӗҫрен кӑларас, хытӑ йатласа астутармалла тӑвас, 2 ҫул хушши йертсе пымалли ответлӑ ӗҫсенӡе ӗҫлеттермелле мар тӑвас.

3. РайКК—ӖХИ претҫетаттӗлне Калккин йулташа парттири ответлӑ ӗҫре хӑварма май ҫук тесе шутлас, ӑна ӗҫрен кӑларас. РайКК—ӖХИ претҫетаттӗлӗ пулнӑ, Мало-Пишшӗвӑри ӗҫсене пӗлсе тӑнӑ, анӡах мӗн кирлине туман Исмайлӑв йулташа хытӑ йатлас, 2 ҫул хушши ответлӑ ӗҫсенӡе ӗҫлеттермелле мар тӑвас. РайКК—ӖХИ инструктӑрне, Ҫерова, колхоҫнӗксене саккунсӑр арӗсленӗшӗн, ун куҫӗ умӗнӡех хӗненӗшӗн нимӗн те туманшӑн парттирен кӑларас, сут умӗнӡе ответ тыттармалла тӑвас.

4. Райколхоссойус претҫетаттӗлӗ пулнӑ Кҫенофонттӑва колхоҫнӗксен шалӑписем ҫине пӳрократла пӑхнӑшӑн, Мало-Пишшӗвӗра колхоҫнӗксене хӗненине кӑмӑлланӑшӑн парттирен кӑларас, сут умӗнӡе ответ тыттармалла тӑвас.

5. Районри проккурора Лепӗтӗв йулташа, милитси

наҫҫаҫнĕкне Уҫанăв йулташа ĕҫе сĕрсе лартнăшăн, асăннă ĕҫсем ҫине пўрократла пăхнăшăн, вăл ĕҫ политтĕк тĕлĕшĕнҫен мĕнле вырăн йышăнса тăнине тивĕҫлĕ хакламаншăн ĕҫрен кăларас, хытă йатласа астутармалла тăвас, 2 ҫул хушшинҫе ответлă ĕҫсенҫе ĕҫлеттермелле мар тăвас.

6. Караҫҫĕвăри ПСК(п)П йаҫейккин пўроне салатса йарас. Йаҫейккă ҫекреттарне Толстова Оҫĕрăва пулăшнăшăн парттирен кăларас, сута памалла тăвас.

7. Мало-Пишшĕвă йалсоветĕнҫен 9 ҫленне кăларнă, тата 4 ҫленне кăлармалла, ҫавăнпа Тĕпĕҫтăвком фраксине унта йалсовет суйлавне иртерме хушас.

8. Ҫăвашколхоссойуса Мало-Пишшĕвăра колхос правленин суйлавне иртерме, «Заря» колхоса кулакла елементсенҫен тасатма хушас.

9. Анҫиккăв йулташ Опком пўровĕ ҫак ҫулти ҫенҭапĕрĕн 28-мĕшĕнҫе йышăннă тăрăх Оҫĕрăвăн кулакла ушкăнĕн ĕҫĕсене тĕрĕслесе, йĕрлесе ҫитернĕ, вăл ĕҫе ҫак окҭапĕр уйăхĕн 19-мĕшĕнҫе пăхса тухмалла тунине асра тытас.

10. Парттин Куславкка райкомне кулакла ушкăнăн ĕҫĕсене йышлă массăсем умĕнҫе тăрă шыва кăларса, вăл ушкăна сутпа айăпласа, Куславкка районĕнҫе ăнлантарас ĕҫе сарса колхоҫнĕксен, уйрăм хуҫалăхлă ĕҫхресҫен массисене парттипе Совет влаҫĕ таврапа пĕтĕҫтерме, хуҫалăхпа политтĕк кампанисен планĕсене тултарас ĕҫре татăклă улшăну тума хушас.

11. ПСҪЛКС Опкомне районри комсомол йертсе пырăвĕ ҫинҫен хăвăртрах пăхса тухма хушас.

12. ПСК(п)П райкомĕсемпе хаҫат ретаксисене Мало-Пишшĕвă урокĕсене сарлакан ҫутатма тата парттипе ĕҫхалăх массине колхоссене орканисатсилĕхпе хуҫалăх ĕҫĕсем йенҫен тĕреклетес, тата колхоса ҫĕнĕ хуҫалăхсем йавăҫтарас тĕлĕшпе тăракан пысăк хуҫалăхпа политтĕк сатаҫĕсене пурнăҫлама, тата Опком кăҫалхи ҫенҭапĕрĕн 5-мĕшĕпе 22-мĕшĕнҫе панă татăклă кăтартусене никĕсе хурса, тырпул хатĕрлев, кĕрхи ҫĕртме тата укҫа-тенкĕ пухас ĕҫ планĕсене тултарма мопилисатсилеме хушас. Йертсе пырас ĕҫре

партти сисёмлёхне татӑклӑн хӑпартмалла, клас тӑшманёсене хирёç кёрешёве колхоçнёксемпе уйрӑм хуçалӑхлӑ ёçхалӑх массине мопилисатсилесе, парттин масӑллӑ ёçёпе партти вёрентёвне ҫӑннипех сарса йамалла.

13. Мало-Пишшёвӑри ёç урокёсем парттипе совет аппараҫён хӑшпёр сыпӑкёсенҫе колхоçнёксемпе уйрӑм хуçалӑхлӑ ёçхресҫенёсем панӑ шалӑпӑсем çине халё те тивёççёр, пӳрократла пӑхнисем пуррине тепёр хут кӑтартаççё, çавӑн пирки пӳрократтисӑма, волоккиттӑна, ёçлё çынсен тёрлё тивёççёр ёçёсене, клас тӑшманёсен совета, колхоса, опҫӑлӑха хирёçле ёçёсене, сылтӑм оппортунисла ёççене тата «сулахай» пӑрӑнҫӑксене вӑхӑтра тӑрӑ шыв çине кӑлармаççё.

Опком пӳровёпе ОКК преçитиумё пур парттипе совет, хуçалӑх, профсойус, совхос, колхос тата копператтив оркӑнёсене те рапоҫҫисемпе колхоçнёксен тата ёççыннисен çырӑвёсемпе шалӑписем çине вӑхӑтра тата тёплё ответсем парасси çинҫен Опком çенӑапёрён 5-мёшёнҫе йыщӑннӑ решшенине çирёп пурнӑçласа пыма хушаççё.

14. Çак постановленине ӑнлантарса пурнӑçлама Куславкка районне Коçинпа Куçнетсов йулташсене командтировккӑна йарас. Опкомӑн оркинструктӑр пайне районсене мопилисатсиленё комуниссенҫен Куславкка парторканисатсине вӑйлатма 4 çынтан кайа мар йама хушас.

ПСК(п)П отв. çекреттарё **Ç. ПЕТРОВ.**

*2-мĕш хушса хуни.*

## Шăмăршă районĕнҌи Ҍепкас-НиккоҌски йалсоветĕнҌи лару-тăрупа „Трактăр“ колхос çинҌен,

### (ПСК(п)П Ҍăваш Опкомĕн пӳровĕ нойапĕрĕн 4-мĕшĕнҌе йышăннă постановлени).

Опком пӳровĕ çакна палăртса парат: Ҍепкас-НиккоҌскинҌи партйаҌейккăра оркпартмассăллă ĕçе, тата маркçисла-ленинла вĕрентĕве наҌар туса пынă пирки, парттире тăракан хăшпĕр çынсем (йалпа колхоса йертсе пыракан сий), парттирен кăларнă Моросăв йертсе пынипеле, йалан ĕçкĕпе иртĕнсе пурăннă май, клас тĕлĕшĕнҌен йут елементсемпе çыпăçса кайнă, вĕсеҌ аллине кĕрсе ӳксе нумай вăхăт хушши преступленисем туса пурăннă. Колхос пурлăхне çаратнă (587 пăт тырă, 695 тенкĕ укçа, 43 сурăх, т. ыт. те), кулаксене хытă сатанисем тăрăх тӳлесрен хăтарса пынă, вĕсене суйа хутсем туса панă, кулаксене колхоса илсе пытарса усранă, колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă хресҌенсене тыта тыта хĕненĕ.

Парттин вырăнти йаҌейккипе районри орканисатсисем (Райколхоссойус, Райĕçтăвком, Райкомпа РКК), çав йĕркесĕрлĕхсем çинҌен пĕлсе тăнă пулсассăн та, вĕсем çине политтĕк йенҌен пăхма пĕлмен; йаҌейккăна, йалсоветне, колхоса сыватса йарас тесе тăрăшмай.

Опком пӳровĕ **çапла йышăнат:**

1. Ҍăвашколхоссойуса, Тĕпĕçтăвкомăн оркпайне,

тата партти райкомне халех Ђепкас-Никкоҍскинҍи йалсовета, „Трактăр“ колхоса, партйаҍейккăна сыватса йама хушас; ку тĕлĕшрен рапотнĕксем тупса памалла, палăртнă çитменлĕхсене çине тăрса тытăнсах пĕтерес, хуçалăхпа политтĕк кампанисене ăнăçлăн ирттерес тесе колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕççыннисен массине йышлăн мопилисатсилемелле.

2. Респуплĕк проккурорне Анҍиккăв йулташа—колхос пурлăхне çаратнăшăн, хуçалăха тирпейлĕхсĕре кăларнăшăн, клас çулйĕрне пăснăшăн айăплисене сута партарма хушас.

3. Парттин Шăмăршă райкомĕн çекреттарне **Никкифăрăв** йулташа, „Трактăр“ колхосра ҍленра тăраканскере—политтĕк йенĕпе курса тăмаллине курманшăн, Ђепкас-Никкоҍскинҍи йĕркесĕрлĕхсем çинҍен пĕлсе тăнă хушăрах—йаҍейккăна, йалсоветне, колхоса сыватас тĕлĕшпе нимĕн те туманшăн, айăплисене ответ тыттарасси çинҍен ыйту лартманшăн, çирĕппĕн йертсе пыма пĕлменшĕн, парттире тăракан массăпа ĕççыннисен йышлă массинҍен уйăрăлса кайнăшăн вырăнтан кăларас.

4. РКК—ЁХИ претçетаттĕлĕ Йеремейĕв йулташ çинҍен пăхса тухас ĕçе ОКК преçитиумне парас.

5. Райĕçтăвком претçетаттĕлне **Алексейĕв** йулташа—колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕççыннисен шалăписем çине ытла усал пўрократла пăхнăшăн, йалсоветĕнҍе ĕçлекенсем ĕçкĕ ăшне путса йут елементсемпе çыпăçса кайнине пĕлнĕ пулсассăн та—йалсоветне сыватас тесе тăрăшманшăн, йĕркесĕрлĕхсемпе килĕшенçи пек пулса ĕçленĕшĕн—вырăнтан кăларас.

6. Райколхоссойус претçетаттĕлĕ пулнă **Куçмин** йулташ çинҍен, колхоçнĕксен шалăписем çине пўрократла пăхнăскер, кулак ашшĕ-амăшсемпе çыхăну тытнăскер çинҍен пăхса тухас ĕçе ОКК-ана парас.

7. Ђепкас-Никкоҍскинҍи партйаҍейккă çекреттарĕ пулнă **Пакланăвă** йулташа—ним ĕçлеменшĕн, йĕркесĕрлĕхсем çине килĕштеренçи пулса пăхнăшăн—ўлĕмрен ун пек тума йураманни çинҍен астутарса хытă йатлас.

8. Халăх сутйи **Купанăв** йулташпа милитси наЂЂаЂнĕкне[1] **Çветски** йулташа—Ђепкас-НиккоЂски ĕçне пăхса тухассине пўрократла вăраха йанăшăн, шăлса пыма хăтланнăшăн йатлас.

9. ОК-ан оркпайĕпе [1]Катăрсен пайне Шăмăршă районне тĕреклетмешкĕн рапотнĕксем тупма хушас.

ПСК(п)П [1]Ђăваш Опкомĕн
ответлă çекреттарĕ **Ç. Петров.**

1. Сотсналисăмшăн кĕрешес ĕçре.

*3-мĕш хуша хуни.*

## Пăраҫкав райкомĕн ĕҫĕсем ҫинҫен.

**(ПСК(п) Ҫăваш Опкомĕн пўровĕпе ОКК преҫитиумĕн пĕрлешўллĕ ларăвĕ окт̆апĕрĕн 31-мĕшĕнҫе йышăннă постановлени).**

Опком пўровĕ ҫакна палăртат̆: партти рукковотствине ҫĕнетнĕ хыҫҫăн—колхоҫнĕксен происвотствăпа политтĕкри хастарлăхĕ ўссе пынă майĕпе, колхоҫнĕксемпе уйрăм хуҫалăхлă ĕҫ хресҫенĕсем хушшинҫи ĕҫе вăйлатса йанă майпа—Пăраҫкав райкомĕн ĕҫĕнҫе ҫылай ҫитĕнўсем пур. Ҫурхипе кĕрхи акасене, уйхиртен пуҫтарса кĕртес ĕҫсене—пĕтĕмĕшпе илсен—вăхăтра тунă. Иртнĕ ҫулхипе танаштарсассăн, уйхирте ҫухалса йуласси кăҫал сахалтарах пулнă. Т̆ырă хатĕрлесе парас плана колхоссем окт̆апĕрĕн 1-мĕш ҫысли тĕлне 117 проҫ.,пĕтĕм районĕпе илсен—ҫулталăк планне кăҫал окт̆апĕрĕн 30-мĕш ҫыслиҫҫен тултарнă.

Колхоссене тĕреклетсе вĕсен тупăшлăхне ўстернĕ майпа, тата колхоҫнĕксемпе уйрăм хуҫалăхлă хресҫенсем хушшинҫи ҫыхăнăва ҫипер майлаштарса йанă майпа колхоссене ĕҫхресҫенĕсем хутшăнса пыраҫҫĕ.

Ҫакăнпа пĕрлех, Пăраҫкав райкомĕн ĕҫĕнҫе ҫылай пысăк ҫитменлĕхсемех пур.

Кивĕ рукковотствăн ҫитменлĕхĕсене пĕтерес, вăл партти ҫулйĕрне пăснисене, сулăнҫăксем тунисене пурне те тўрлетсе ҫитерес йенпе тума кирлисене ҫĕнĕ рукковотствăпа РКК—ЁХИ веҫех туса ҫитермен. Райком массăсем хушшинҫе ĕҫлессипе самокриттĕккăна наҫар сарăлтарса пынă; йаҫейккăсене, йалсене

колхоссене йертсе пырас ĕçе кирлĕ пек туса пырайман, актив хушшинҫе наҫар ĕçленĕ.

Тĕрлĕ çитменлĕхсене, клас çулйĕрне пăснисене пĕтерес тесе партйаҫейккăсене, колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕççыннисен йышлă массисене наҫар мопилисатсиленĕ. Районри активăн пĕр пайĕ çĕнĕ партрукковотствăна çителĕклĕ пулăшман, хăшпĕр ҫух çитменлĕхсемпе сулăнҫăксене шăла-шăла лартнисем пулнă.

Çавăн пирки те вара хуçалăхпа политтĕк кампанисене ирттернĕ ҫух револҫутсиллĕ саккунлăха ытла та куç-кура тăрах пăснисем, сулахайла пăрнăçсемпе сылтăмла ĕçсем тунисем палăраççĕ.

Райкомăн хăшпĕр уполномоҫĕннăйĕсем тӳрех пулăшнипеле хăшпĕр йалсенҫе (сăмахран, Лҫупимăвкăра) йалсовеҫĕсенҫе ĕçлекенсемпе партги ҫленĕсем кулаксенҫен туртса илнĕ пурлăха салатса пĕтернĕ хăйсем ваҫҫи илнĕ; саккунран иртсе кайса арĕссем опăскăсем тунă, штравсем хунă, вăтам хресҫенсене хытă сатанисем панă, т. ыт. те.

Çав перекипсемпе йĕрчесĕрлĕхсене çине тăрса тытăнсах пĕтерес вырăнне, Райĕçтăвком хăй те уйрăм хуçалăхлă ĕççыннисем тĕлĕшĕпе сулахайла линисем тытса ĕçленĕ, пĕр атминистратсилле хушусем пара-пара ларма çех йурагнă. Колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕççыннисем йалсовеҫĕсен йĕркесĕр ĕçĕсем çине кăтартса панă шалăписем районри оркăнсенҫе уйăхĕ-уйăхĕпе выртнă, районри сутпа çлетстви оркăнĕсем çав шалăпсем пирки ним те туман.

Опком пӳровĕпе ОКК преçитиумĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1. Пăраҫкав районне йĕрлесе тухнă комиççин выбăҫĕсемпе (тĕп шухăшĕсемпе) вăл сĕннисене йышăнас.

2. Пăраҫкав райкомĕн çекреттарĕ Çелеçнҫов йулташпа Райĕçтăвком претçетаттĕлĕ Çимин йулташ: ĕçре пулнă перекипсемпе йăнăшсене ОК-па комиççи кăтартăвĕсем тăрăх тӳрлетсе пыратпăр, пĕтĕмĕшпе илсессĕн—вĕсене тӳрлетнĕ ĕнтĕ, перекипсемпе пре-

ступленисемшĕн айăплисене ответ умне тăратнă, тесе каланине асра тытас.

3. Райкомăн ĕлĕкхи рукковотсви тунă перекипсемпе йăнăшсене çине тăрса тытăнсах пĕтерме тăрăшманшăн, ĕçре клас çулйĕрне çирĕппĕн тытса пыманшăн, тата тĕрлĕ йăнăшсене, перекипсемпе преступленисене хирĕç кĕрешес тесе партти ђленĕсене, комсомолĕссене, колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕççыннисене нађар мопилисатсиленĕшĕн Пăрађкав райкомĕн пўровĕпе РКК преçитиумґе астутарас.

4. Колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕççыннисен çырăвĕсемпе шалăписем çине пўрократла пăхнăшăн, преступленилле ĕçсене пĕтерме тăрăшманшăн—Райĕçтăвком фраксине йатлас.

5. Колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă хресђенсен шалăписене пăхса тухас ĕç çине хурмă йенĕпе çех, пўрократла пăхнăшăн—райпроккурор **Лепĕтĕв** й-ша, тата халăх сутйи **Корсакков** й-ша астутарас.

6. Љупимăвкăри ĕçе тĕпђесе пĕлесси çине ниме йурăхсăр пўрократла пăхнăшăн, çлетстви ĕçне кирлĕ пек туса пыма пултарайманшăн—çлетăваттĕл **Винократăв** й-ша вырăнтан кăларас.

7. Йалхуçалăх налокĕ илмелли йапаласене (опйектсене) уђђота илес ĕçе туса ирттересси çине пўрократла пăхнăшăн, вăтам хресђен хуçалăхĕсенђен интивитуаљни налок илмелле тунăшăн—районри финанс пайĕн саветушђине **Сурккөв** й-ша вырăнтан кăларас.

8. Партти райкомне—парттин оркмассăллă ĕçне сарăлтарса пырса, рапођђисене, колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕççыннисене мопилисатсилесе—пур йăнăшсене те çине тăрсах пĕтерме хушас; сылтăмла практĕккăна хирĕç, сулахайла пăрăнăçсене, тата вĕсемпе килĕштерме пăхакансене хирĕç пит хыттăн кĕрешсе пыма хушас.

9. Парттири темократтийе, самокриттĕккăна, марксисла-ленинла вĕренĕве сарăлтарса пырса, актив хушшинђе аванрах ĕçлесе пырса районри партор-

канисатсисен кĕрешӳри хастарлăхне, вĕсен малта йертсе пыраслăхне хăпартмалла, ӳстермелле, çапла майпа вара Пăраҫкав районĕнҫи парторканисатси умĕнҫе тăракан сатаҫсене пурнăçа кĕртсе пымалла пултăр.

10. Ҫирлĕ йавленисемпе клас çулйĕрне пăснисене хирĕç кĕрешес ĕçре районри пиҫет наҫар ĕçленине палăртса, „За большевистские темпы" хаçат ретаксине—партти çулйĕрне, тата район умĕнҫе тăракан сатаҫсене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пырас ĕçре—хăйĕн мопилисатсилемелли, орканисатсилемелли вăйхăватне тĕреклетмешкĕн хушас.

ПСК(п)П Ҫăваш Опкомĕн
ответлă çекреттарĕ **Ç. Петров.**

*4-мĕш хушса хуни.*

## Сĕнтĕрвăрри районĕнҫи Ёсмĕл колхосне пăхса тухни ҫинҫен.

**(ПСК(п)П Ҫăваш Опкомĕн ҫекреттариаҫĕ октăпĕрĕн 9-мĕшĕнҫе йышăннă постановлени).**

1. Ёсмĕл колхосĕ пасарлă йалта ҫăмăртаннă. Кунта сутуҫ-ҫпеккуҫантла елементсем, шинккарсемпе хуликансем ҫылай пур. Ҫавăнпа та Райколхоссойусăн, Райĕҫтăвкомпа партти Райкомĕн ку колхос ҫине ăраснах ҫавăрăнса пăхмалла пулнă. Анҫах район орканисатсийĕсем колхоса ҫăннипех кирлĕ пек йертсе пыман, ăна кулленхи ĕҫре пулăшу паман. Ҫакăн пирки колхоса пăсăлса кайнă, йут елементсем кĕрсе пĕтнĕ.

2. Колхос правленийĕ (претҫетаттĕлĕ Ҫитакков Кĕркури), колхоса ҫав пăсăлса кайнă, йут елементсенҫен тасатас вырăнне, вĕсене ҫаплах колхоса кĕртсе пынă; вĕсемпе ҫыпҫăнса кайнă; Купанов йертсе пынă хуликансен ушкăнĕпеле хăйсен интересĕсемшĕн усă курнă, колхоҫнĕксемпе уйрăм хуҫалăхлă ĕҫҫыннисене хăратса пурăннă, хĕненисем пулнă, колхос пурлăхне ҫаратнă (кĕреҫе ҫăнăхне сутнă, колхос укҫисене хăйсем ваҫҫи илнĕ, тырра ампара хунă ҫух тĕрĕс виҫмен, т. ыт. те).

3. Сутпа ҫлетстви оркăнĕсем ҫав йĕркесĕрлĕхсем ҫине вăхăтра ҫавăрăнса пăхман, ĕҫсене тĕпҫессине, пăхса тухассине йури пекех вăраха йарса пынă, ҫак майпа вара колхосри йĕркесĕрлĕхсем пушшех шалалла кĕрсе кайнă.

Опком ҫекреттариаҫĕ **ҫапла йышăнат:**

1. Ҫăвашколхоссойус фраксипе партти Райкомне

колхосса халех сыватса йама хушас, кирлӗ рапотнӗксем тупса парса тӗреклетмелле ӑна, правленипе ревиҫи комиҫҫине ҫӗнӗрен суйламалла, колхоса йермешсе кайнӑ йут елементсенђен тасатмалла; колхосри хуҫасӑрлӑхпа йӗркесӗрлӗхсене пӗтерес, колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх тӗлӗшӗнђен ҫирӗплетес, хуҫалӑхпа политтӗк кампанисене ӑнӑҫлӑ иртерес тесе колхоҫнӗксемпе уйрӑм хуҫалӑхлӑ ӗҫҫыннисене йышлӑн мопилисатсилес пулаť.

2. Проккурорӑн Сӗнтӗрвӑрри районӗнђи помошнӗкне Алекҫейӗв йулташа Ёсмӗл колхос ӗҫне пӑхса тухассине васкатма, колхос пурлӑхне тирпейлӗ тытманшӑн, ҫаратнӑшӑн айӑплисене (К. Ҫиťаккова, Л. Солина, тата ревком претҫетаттӗлне) сутпа хытӑ айӑплама хушас.

3. Милитси нађђаљнӗкне Кутревтсӗв йулташа, уђђаскӑри инҫпектӑра Тмитрийев йулташа ӗҫрен хӑтармалла тесе партти райкомӗ йышӑннӑ постановленийе ҫирӗплетес. Ёсмӗл ӗҫне тӗпђесе пӗлессине вӑраха йанӑшӑн Кутревтсӗв йулташа хытӑ айӑплас.

4. Ђитнайӑв йулташпа ОК-н катӑр пайне Сӗнтӗрвӑрри районне халех милитсире ӗҫлекен ҫынна тупса пама калас.

5. Колхоссене нађар йертсе пынӑшӑн, колхоҫнӗксен шалӑписем ҫине кирлӗ пек ҫавӑрӑнса пӑхманшӑн Райколхоссойус правленине выкӑвӑр парас, нумай вӑхӑтлӑха ӗҫлеме тесе Ёсмӗл колхосне пӗр инструктӑр йама калас.

ПСК(п)П Ђӑваш Опкомӗн
ответлӑ ҫекреттарӗ **Ҫ. П. Петров**

## ТЎРЛЕТНИ

Çак кĕнекен 4-мĕш стр., айалтан 7-мĕш йĕркере, çапла çапăннă:

„вăтамсен уйрăм ушкăнĕсем, ҫухăнсем те, уйрăм колхоссенҫен кайалла тухнисем пулҫĕç."

Ăна çапла вуламалла:

„вăтамсен уйрăм ушкăнĕсем ҫўхеннисем, уйрăм колхоссенҫен кайалла тухнисем пулҫĕç"

---

Послано в производство 1-XII-32 г.
Подписано к печати 5-XII-32 г.
Редактор А. Иванов
Тех. редактор И. Сидоров

Уп. Чувашлита № 1579 Заказ № 1492 Тираж 6.100 экз.

Ст. ф. б. 130X180 Об'ем 1,75 п. л. 58,000 п. з. в п. л.

Хакĕ 30 пус.
Цена 30 коп.

ОП—1

С. П, ПЕТРОВ.

Усилим большевистскую бдительность в борьбе за социализм.

Чебоксары. 1932. Чувашиздат.